Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 АВГУСТ 12 ЕРНЕКУН 185 (4998) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухат. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АСС Республикĕн Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—3—55, йалхуçалăх пайĕн—4—97, советсен пайĕн—0—88, промышленнăç пайĕн—7—87, йалкорсен пайĕн—2—36, эксургайĕн — 6—23.

Вырăнти промышленнăçăн пайанхи задачисем

Кăçал пирĕн республикăри вырăнти промышленнăçăн иртнĕ çулхинчен 37 процент ытларах, 3 мĕлйун та 679,5 пин тенкĕлĕх продукци памала. Уйсăр пуçне районри промышленнăç йенĕпе 1137 пин тенкĕлĕх ытла продукци туса кăлармăла.

Çак плана ăнăçлăн тултарма республикăра условисем çителĕклĕ. Сталинла икĕ пилĕкçуллăх хушшинче туса лартнă çĕнĕ, вăйлă техникăлă хапрăк-савăтсем лайăх пахалăхлă продукци йышлăн туса кăларма пултараççĕ. Республикăри промышленнăç 1936 çултах вăрçăчченхинчен 11 хут ытларах продукци пама тытăннă. 1937 çулта промышленнăçăн продукци хисепĕ тата 11,8 процент ӳснĕ. Стахановла йухăм сарăлса пыни ĕç тухăçлăхне çĕклеме çул уçса парат. Республикăра чĕрĕ таварсен пуйанлăхĕ тулăх, предприйатисенче пысăк тухăçлăхпа ĕçлекен кадрсен хисепĕ те ӳссех пырат.

Промышленнăçри рабочисемпе инженерла-техникла работниксен пĕтĕм коллективĕ ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн пысăк çĕкленӳпе кĕрешет. Вăл çĕкленӳве йĕркеллĕн организацилени çав тери пысăк çĕнтерӳсем тума май паракан чаплă вăй пулса тăни çинчен калакан тĕслĕхсем вырăнти промышленнăçра та çахал мар. Вăрнарти фосфорит савăчĕн коллективĕ производствă планне йалан тултарса пырат. Иртнĕ çурçул планне 120,5 процент тултарнă. Çавнашкалах „Метровес" производствисем хăйсен планне 108 процент тултарнă. Коммуниссен партийĕ, совет правителстви вырăнти промышленнăçа йалан пулăшса пыраççĕ, çавăнпа унăн плана тултарма çеç мар, ытлашшипех пурнăçа кĕртме майсем пурри те ӳссăнах курăнса тăрат.

Апла пулин те вырăнти промышленнăç кăçал малтанхи çурçур планне 94,1 процент çеç тултарнă. Кайа йулса пырассине пĕтерес тĕлĕшпе ийуль уйăхĕнче те палăрмалăх ĕçсем туман. Вырăнти промышленнăç плана тултарманни кăçал çеç мар, чылай çулсем хушши пырат ĕнтĕ. 1937 çулти плана та Вăрнарти фосфорит савăчĕсĕр пуçне пĕр предприйати те тултарман.

Мĕнрен килет-ха Чăваш республикĕн вырăнти промышленнăçĕ çавнашкал йулса пыни? Нумай пулмасăт хăйĕн ĕçне пĕтернĕ Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çеççийĕнче начар ĕçлекен халăх комиссариачĕсене депутатсем вирлĕн те тивĕçлĕн критиклерĕç. П. А. Белоруссăн депутат вырăнти прмышленнăç кайа йулса пыни Вырăнти промышленнăç Халăх Комиссариачĕ тата унăн руководителĕ пулнă Самарин йулташ тăшмансен сăтăрлă ĕçĕн йулашкисене пĕтерессишĕн кĕрешессине йертсе пыманнинчен, ĕçе организацилес, стахановлă йухăма çĕклес тĕлĕшпе ĕçлеменнинчен килни çинчен каларĕ. Вăл хăй сăмахне куçа çиекен фактсемпе çирĕплетсе пачĕ.

Вырăнти промышленнăç Халăх Комиссариачĕн тĕп производстви—строителствă материалĕсем тăвасси прорывра. Шупашкарти тата Иванăвăри кирпĕч савăчĕсем иртнĕ çурçул хушшинче государствăна хĕртнĕ кирпĕчсем 986 пин штук ытла, чĕрĕ кирпĕчсем 1545 пин штук парайман. Ийульти плана тултарман пирки вăл хисеп тата та ӳснĕ. Çĕнĕ строителствă планне тултарас тĕлĕшпе те мала кайман. Вăрманкасра (Шупашкар районĕ) кирпĕч савăчĕ тунă çĕре кăçал 200 пин тенкĕ хывмала. Ку таранччен пĕр пус та хывман. Улатăрти гармонь хапрăкне туса çитерсе ĕçе кĕртме 2285 пин тенкĕ панă. Вăл хисепрен 620 пин тенкĕпе кăна усă курнă. Уйрăмах торф кăларас ĕçе организацилесси начар пырат. Атăл-леш йенчи торф пуйанлăхĕсемпе усă курассине организацилеме 400 пин тенкĕ хывмала пулнă, 24 пин тенкĕ çеç хывнă.

Вырăнти промышленнăç начар ĕçлени йăсăртран пулман. Вăл Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн руководствинче пулнă çынсем большевикла тимлĕхне, çивĕчлĕхпе ĕçлессине кăшкăравлă решенисем çырнипе, ларусем тата комиссисем тунипе улăштарнинчен килсе тухнă. Халăх Комиссарĕсен Совечĕ вырăнти промышленнăç пирки нумай решенисем йышăннă. Анчах вăл решенисене пурнăçа кĕртнине тĕрĕслемен. Ку вара халăх комиссариачĕн, предприйатисен руководителĕсем хушшинче ответлăха йăвашлатасси, çавна пула пĕтĕм ĕçе йухăнтарасси патне илсе пынă.

Халĕ кирпĕч савăчĕсенче, стройкăсенче ĕç вăйĕ çитмест. Ку руководителĕсем ответлăха туйманнинчен килсе тухнă. Савăтсене çуллахи сезона хатĕрленĕ вăхăтра кирпĕч савăт директăрĕсем машинсене йусанипе, ĕç вăйĕ пухма договăрсем тунипе каппайса, пурнăç условисене лайăхлатасси çине сăмаллăн пăхни сезон пуçламĕшĕнчех хыттăн палăрнă. Анчах та Вырăнти промышленнăç Халăх Комиссариачĕ ун çине тивĕçлипе пăхман. Халăх комиссариатĕнчен пĕр километрта ларакан Шупашкарти кирпĕч савăтĕнче пурăнма лайăх условисем пулман пирки ĕçлекенсем улшăнни пысăк. Унта культурăлă-массăлă ĕçе йĕркелемен. Социалисăмла ăмăртупа стахановлă йухăм начар сарăлса пырат. Савăта каплă хăвăрма май çук. Халех рабочисем çителĕклĕ пухассине татса паракан кирлĕ условисем тумала.

Районсенчи промышленнăç ĕçне вăйлатас йенĕпе те Вырăнти промышленнăç Халăх Комиссариачĕ çинче пысăк ответлăх тăрат. Районри предприйатисене техникă йенчен йертсе пымала. Анчах калас пулат, вăл ĕççене халиччен манăçа хăварнă. Тракри тата Йетĕрнери кирпĕч савăчĕсене двигателсем лартма Вырăнти промышленнăç Халăх Комиссариачĕ вăхăтра пулăшу паман. Çавна пула савăтсем кайа йулма тытăннă, вара плана тултарасси те прорыва кĕрсе ӳкнĕ. Районсенчи кирпĕч производствисем çурçулхи плана 61,7 процент çеç тултарнă.

Вырăнти промышленнăçри работниксем хушшинче ответлăха, дисциплинăна çирĕплетсен, рабочисен пурнăçпа ĕçлă условийĕсене лайăхлатсан, социалисăмлă ăмăртупа стахановлă йухăма вăйлатсах пырсан ĕç хăвăрттăн малала кайма пултарат. Халăх комиссариачĕн руководствинчи çĕнĕ çынсен массăсен пысăк активлăхне ĕçе лайăхлатнă çĕре йăмала тăвас пулат. Пысăк тухăçлăхпа ĕçлекен стахановецсем нумай. Шупашкарти кирпĕч савăтĕнчи рабочисем Закирăв, Долгих, Калайĕв йулташсем нормăна йалан 200 процент таран, Иванăвăри кирпĕч савăтĕнчи рабочи Йарушкин йулташ 183 процент тултараççĕ. Нормăна тултарса ĕçлекенсем ытти предприйатисенче те çĕршерĕн шутланаççĕ. Вĕсен опытне анлăн сарса пымала.

Строителствă материалĕсем тăвакан производствăшăн халĕхи вăхăт хаклă. Вырăнти промышленнăç Халăх Комиссариачĕн хăйĕн строителствă материалĕсем тăвакан предприйатисене халех малти вырăна кăларса, плана сезон пĕтиччен ăнăçлăн тултармала тăвас пулат. Апла тума халăх комиссариачĕн руководителĕсенчен пуçласа рабочисем патне çити кашни пысăк ответлăха туйса ĕçлени кирлĕ.

Совет ĕççыннисен материаллă пурнăçĕпе культурлăхĕ ӳссех пыни куллен кирлĕ таварсем кăларас ыйтăва пĕтĕм пысăкĕшĕпе çивĕччĕн кăларса тăратат. Ку задачăна пурнăça кĕртес тĕлĕшпе вырăнти промышленнăçăн пуçарулă ĕçсем туса пымала. Куллен кирлĕ таварсем кăларассине плана тултарса пырассине шута илни тăрăх мар, чĕрĕ таварсен пуйанлăхĕпе туллин усă курас май организацилемеле.

Партипе совет организацисем вырăнти промышленнăç ĕçĕсемшĕн пĕтĕм ответлăха тытаççĕ. Апла пулсан вĕсен вырăнти промышленнăçа çĕклесех пырас тĕлĕшпе куллен тимлĕн ĕçлемеле. Районти производствăсенче стахановла йухăма вăйлатас, чĕрĕ таварсен пуйанлăхĕсемпе усă курса çĕнĕ производствăсем организацилес ĕçе халамасăр тăни пулмала мар.

ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çеççийĕ
Çеççи уçăлни

Августăн 10-мĕшĕнче Кремльре ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çеççийĕ уçăлнă.

Кăнтăрла 2 сехетре Сойуз Совечĕн ларăвĕ пулнă. Ăна Сойуз Совечĕн Председателĕ А. А. Андрейĕв депутат уçнă. Ларура пурте пĕр саслăн Çеççин çакăн пек кун йĕркине йышăннă:

1. ССР Сойузĕн 1938 çулти пĕтĕм государствă бюджетне çирĕплетесси. ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тăратат.

2. „ССР Сойузĕн, сойузлă тата автономлă республикăсен судоустройствă Положенин" пройекчĕ. ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тăратат.

3. ССРС Верховнăй Судне суйлаççи.

4. „ССРС гражданстви çинчен" калакан саккун пройекчĕ. ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тăратат.

5. „Йут çĕршывсемпе тунă договăрсене ратификаци тăвас тата денонсаци тăвас йĕрке çинчен" калакан саккун пройекчĕ. Национальнăçсен Совечĕн Йут çĕршыв ĕçĕсен Комиççийĕ тăратат.

6. „Уйрăм хуçалăхсен лашисем çине государствă налогĕ хурасси çинчен" калакан саккун пройекчĕ. Сойуз Совечĕн Саккунсем хатĕрлекен Комиççийĕ тăратат.

7. Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выстăвки çинчен. Украинă ССР Республикĕнчен суйлана депутатсен ушкăнĕ тăратат.

8. ССРС Верховнăй Совет Президиумĕн Пĕрремĕшпе Иккĕмĕш Çеççисем хушшинче кăларнă тата ССРС Верховнăй Совечĕ çирĕплетмели указĕсем çинчен.

Кăнтăрла 4 сехетре Национальнăçсен Совечĕн ларăвĕ пулнă, ăна Национальнăçсен Совечĕн Председателĕ Н. М. Шверник депутат уçнă.

Ларура Çеççин кун йĕркине—Сойуз Совечĕ йышăннă кун йĕркинех пурте пĕр саслăн çирĕплетеççĕ.

Каçхине 7 сехетре Сойуз Совечĕпе Национальнăçсен Совечĕн пĕрлехи ларăвĕ пулса иртнĕ.

Нумай хăнасем—Мускаври хапрăксемпе савăтсенчи рабочисем, ăслăлăх, культурă, искусствă, Хĕрлĕ Çарпа флот представителĕсем пынă.

Правителствă ложисем çине Сталин, Молăтăв, Калинин, Кагановичч, Ворошилăв, Микойан, Жданăв, Йежов, Хрущчов йулташсем, ССРС Верховнăй Совет Президиумĕн членĕсем, Халăх Комиссарĕсем пыраççĕ.

Сталин йулташа, партипе правителствă руководителĕсене депутатсемпе хăнасем калама çук хавхаланса, чĕререн çĕкленсе саламлаççĕ. Совет Сойузĕнчи халăхсен тĕрлĕ чĕлхипе калзнă хавасла саламлă сăмахсем залăна пĕр вĕçĕнчен тепĕр вĕçне йанраса кайаççĕ.

Ларăва председател пулса йертсе пыракан Андрейĕв йулташ Сойуз Совечĕпе Национальнăçсен Совечĕн пĕрлехи ларуне уçăлнă тесе пĕлтерет тата доклад тума ССРС Финанс Халăх Комиссарне Зверĕв йулташа сăмах парат.

Зверĕв йулташăн Совет Сойузĕн хуçалăхĕпе культури ӳссе чечекленсе пынине кăтартса паракан цифрăсемлĕ, фактсемлĕ уçăмлă докладне Çеççи пысăк тимлĕхпе итлет.

ССР Сойузĕн 1938 çулти пĕтĕм государствă бюджечĕ доходсем тăрăх—125 мĕлйард та 184 мĕлйун тенкĕ тата расходсем тăрăх—123 мĕлйард та 684 мĕлйун тенкĕ пулат. Сойузлă тата республикăлă бюджетсем тăрăх халăх хуçалăхне укçа-тенкĕ парса тăрас ĕç вальли 47 мĕлйард та 212 мĕлйун тенкĕ уйăрса хураççĕ, социаллă-культурăлă расходсем вальли сойузлă тата республикăлă бюджетсем тăрăх—12 мĕлйард та 148 мĕлйун тенкĕ, вырăнти бюджетсемпе пĕрле шутласан—31 мĕлйард та 400 мĕлйун тенкĕ.

Йулашкинчен Зверĕв йулташ çĕршыв оборонин нушисем çинчен уйрăмăн чарăнса тăрат. Вăл фашисла çĕршывсен, ССР Сойузне хирĕç вăрçă чĕртсе йама тăрăшакансемсен, татти-сыпписĕр провокацилĕ ирсĕр ĕçĕсем çинчен астутарат. Задачă—аслă социалисăм çĕршывĕн хăватне ывăнма пĕлмесĕр тĕреклетессинче. Çакна кура Сойузăн 1938 çулти бюджечĕ çĕршыв оборонин нушисем вальли 27 мĕлйард тенкĕ уйăрса хума палăртат.

ССРС Верховнăй Совечĕн Çеççийĕ, хăй ырăланине палăртса, Финанс Халăх Комиссарĕн сăмахĕсене тăвăллăн алă çупса саламлат. Рабочисемпе Хресченсен никам çĕнтереймен Хĕрлĕ Çарне тата Тинĕс-Çар Флотне чыслаçа, депутатсем хĕрӳллĕ оваци тăваççĕ.

Зверĕв йулташ докладĕ хыççăн лару хупăнат.

(ТАСС).

ССР Сойузĕн Финанс Халăх Комиссариачĕ пĕлтерни
1938 çулти августăн 10-мĕш

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановлени тăрăх кăçалхи ийулĕн 1-мĕшĕнче 5 мĕлйард тенкĕлĕх кăларнă Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх (пĕрремĕш çулхи кăларăм) Займа кăçалхи августăн 9-мĕш тĕлне 5.887.390.000 тенкĕлĕх вырнаçтарнă, урăхла каласан, вăл 887.390.000 тенкĕлĕх иртерсе вырнаçтарни пулат.

Займа çырăнни кăтартса панă цифрăртан нумай иртсе кайнине шута илсе, правителствă малашне займ çырăнассине чарса лартма йышăннă, ССРС Финанс Халăх Комиссариачĕн оргăнĕсене кун çинчен распорйажени панă.

(ТАСС).

Хасан кӳлли районĕнчи тытăçусем пирки

Августăн 10-мĕшĕнче Йапони послĕ г. Сигемицу каллех Йут çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ Литвинăв йулташ патĕнче пулнă. Харпăрхăй шухăшĕсене пĕр-пĕрне пĕлтерне хыççăн, Халăх Комиссарĕ совет правителстви йачĕпе çакăн пек сĕнӳсем парат:

1. Августăн 11-мĕшĕнче вырăнти вăхăтпа 12 сехетре Йапонипе совет çарĕсем пур тĕрлĕ вăрçă ĕçĕсене те чарса лартаççĕ. ССР Сойуз тата Йапони правителствисем кӳн пирки çийĕнчех распорйажнисем параççĕ.

2. Совет çарĕсем те, çавăн пекех тата Йапони çарĕсем те хăйсем августăн 10-мĕшĕнче вырăнти вăхăтпа 24 сехетре мĕнле линисем йышăннă, çав линисем çинче йулаççĕ.

3. Чикĕри тавлашулă участкăна редемаркаци тума хутăш комиççи тăваççĕ, вăл комиççине кĕреççĕ: ССР Сойузĕнчен икĕ представител тата Йапонипе Манчжури йенчен икĕ представител, тата икĕ йенĕ те калаçса килĕшнĕ тăрăх, виççĕмĕш государствăсен гражданĕсенчен тунă арбитр пулат.

4. Редемаркаци тĕлĕшпе ĕçлекен комиççи Российăпа Китайăн полномочнăй представителĕсем алă пусса çирĕплетнĕ договăрсемпе картăсем тăрăх ĕçлет.

Посол Сигемицу малтанхи икĕ сĕнĕве пĕтĕмĕшпех йышăннă, арбитража йышăнман. Литвинăв йулташ, редемаркаци тăвас ĕçе килĕшӳ тăвассине шантаракан витĕмлĕрех гаранти вăл комиççине ку ĕçпе пачах интереслĕмен арбитр пулнă пулĕччĕ, тесе кăтартса панă, анчах посол хирĕç калаçнине пула вăл çав арбитражшăн çине тăман. Çапла вара виççĕмĕш пунктра та килĕшӳ пулнă шутланат.

Редемаркаци тумалли комиççи ĕçĕн никĕсĕсем çинчен тăракан ыйту тăрăх килĕшӳ тăвайман. Посол Сигемицу совет правителствине халиччен кăтартман, çавăнпа та совет правителствишĕн нимĕн те паллă мар темĕнле урăх материалсене те ĕç никĕсне хума сĕнне. Çапах та, г. Сигемицу ку ыйту тăрăх хăй правителствинчен ыйтса пĕлме тата çывăх вăхăтрах ответ пама пулнă.

(ТАСС).

Епĕр хатĕр!

ÇĔРПӲ. Епĕр, „Планета" колхоз çумĕнчи комсомол организацинчи комсомолецсем, кашни кунах хаçат-журналсем вулатпăр, колхозниксене те вуласа паратпăр. Инçет-Хĕвелтухăçĕнче Йапони военщинин провокаци туни çинчен вуласа парсан, колхозниксем çав тери тарăхса кайаççĕ, хайар çилĕпе Йапони фашисăмне ылханаççĕ. Ака, Йефимăв Куçма, 65 çултан иртнĕ колхозник, 1905 çулта Йапонипе вăрçнă вăхăтра хĕнхур курнине, хăйĕн урине амантнине, ĕлĕкки йăвăр пурнăça аса илсе çапла каларĕ:

— Ĕлĕк пирĕн пурнăç калама çук йăвăр пулнă. Микулай патша йут çĕрсене хапсăнса халăх йунне йухтаратчĕ. Халĕ Йапони фашисăмĕ пирĕн телейлĕ те савăнăçлă пурнăça туртса илесшĕн, пирĕн Совет çĕршывĕ çине тапăнасшăн. Йапони пирĕнпе çапăçма килет пулсан, хам вăтăлăха пăхмасăрах, халăхпа пĕрлĕ, пайан тесен пайанах Йапони фашисăмне патма кайатăп.

Пур колхозниксем те, колхозницăсем те тăван çĕршыв илемне, пурнăç аваннине курса савăнаççĕ, вăрçă пуçарса йаракан фашисăма ылханаççĕ, кирлĕ вăхăтра хăватлă отпор пама пурте хатĕр.

Г. Дернов.

Йапонийе нихăçан та хамăртан мăшкăлама памăпăр

Йапони самурайĕсем Совет Сойузĕн Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи чиккине пăсса пирĕн территори çине тапăнса кĕнине хирĕçлесе Йенĕш Нăрвашри „Красная Чувашия" колхозра (Тăвай районĕ) митинг пулса иртрĕ.

Митингра 50 çулхи колхозница Матрйонă Çтепанăвă çапла каларĕ:

— Манăн икĕ ывăл Хĕрлĕ Çарта, пĕри танкис, тепри кавалерис. Кăçал теприне летчике паратăп. Вĕсемсĕр пуçне, манăн тата икĕ ывăл пур. Вĕсене те ӳстерсе, паратăп. Йапонийе нихăçан та хамăртан мăшкăлама памăпăр.

Митинг пĕр саслăн çакăн пек резолюци йышăнчĕ:

„Совет Сойузĕ çине йунлă аллине тăсма хăтланакан Йапони бандичĕсене чĕререн ылханатпăр. Епĕр, колхозниксем, совет çĕршывĕнчи мĕн пур халăхсемпе пĕрле, хамăрăн социалисăмлă тăван çĕршыва сыхлама пурте хатĕр тăратпăр. Епĕр совет халăхĕн мирлĕ пурнăçне пăсма никама та ирĕк парас çук. Йапони самурайĕсен ирсĕр провокацине ответлесе государствă умĕнчи парăмсене кĕске срукрах парса тататпăр. Уйри тырпула кĕске вăхăтра, пĕр тăкмаламасăр пухса кĕретпĕр. Çĕнĕ займ укçине хăвăрт парса тататпăр.

Партипе правителствă пире пĕрре чĕнсенех, епĕр Совет Сойузĕн 170 мĕлйунлă халăхпа пĕрле тăван çĕршыва сыхлама пĕр харăс тăратпăр.

Сывă пултăр коммуниссен большевикла партийĕ!

Сывă пултăр пархатарлă Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин йулташ!"

Пĕтĕм тĕнчери Çамрăксен XXIV-мĕш Кунне кĕтсе илер

ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕ Пĕтĕм тĕнчери Çамрăксен XXIV-мĕш Кунне хатĕрленесси çинчен пур комсомол организацийĕсем патне те йатарласа çыру йанă.

Праçника хатĕрленсе, комсомол организацийĕсен Ленинпа Сталин капиталисăмлă йĕритавралăх çинчен каланисене çамрăксене анлăн ăнлантарса парас пулат, интернационаллă пролетариллĕ çыхăнусене çирĕплетме, Совет Сойузĕн тĕрекне пур майсемпе те çирĕплетсе пыма кирли çинчен ăнлантарса парас пулат.

Комсомол организацисен задачи—оборонăлă ĕçе, уйрăмăн илсен, летчиксем, артиллериссем, танкисем тата парашутиссем вĕрентсе хатĕрлес ĕçе анлăн сарса йарасси. Кашни комсомолец пĕр пĕр паллă çар специальноçне вĕренме тивĕç. Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар Флотне çамрăксене призыв урлă илес ĕçе кăтартуллă, лайăх хатĕрленсе çитес пулат, кун çине уйрăмах пысăк тимлĕхпе пăхмала.

ПСÇЛКС Тĕпкомĕ пур комсомол организацисене те кăçалхи çентябрĕн 1-мĕшĕнчен комсомол пухăвĕсем иртерме, вăл пухусенче Пĕтĕм тĕнчери Çамрăксен XXIV-мĕш Кунĕ çинчен докладсем тума хушнă. Комсомол группăсен пухăвĕсенче, бригадăсенче, общежитисенче, вулав çурчĕсенче, парксенче комсомол активĕн вăйĕсемпе калаçусем, лекцисем тата докладсем туса иртереççĕ, вĕсен темисем çапла пулаççĕ: „Фашисла агрессăрсен йут çĕрсене туртса илес политики (Германи, Итали, Йапони)", „Пут-çĕршывсенчи разведкă оргăнĕсен, вĕсен троцкисла-бухаринла тата буржуаллă-националисла агентурин ĕçри метăчĕсемпе прийомĕсем çинчен", „Сталинла Конституци тата совет çамрăкĕсем", „Фашисăмлă çĕршывсенчи çамрăксен пурнăçĕ" т. ыт. те.

Çентябрĕн 6-мĕшĕнче пĕтĕм совет çĕршывĕ тăрăх массăллă демонстрацисем тата савăнăçлă гуляньесем пулаççĕ. Совет çамрăкĕсем хăйсем вăрçа тата фашисăма хирĕç кĕрешме пĕтĕм тĕнчери пролетарисемпе тăванлă, пĕр шухăшлă пулнине кăтартса пама, хăй коммунисла партипе тата халăхсен аслă çулпуçне, çамрăксен чи лайăх туссне Сталин йулташа чĕререн йуратса тăнине, хăй социалисăмлă тăван çĕршывăмăра сыхлама тăма кашни самантрах хатĕр пулнине кăтартса пама урамсене тухаççĕ.

Пĕтĕм тĕнчери Çамрăксен XXIV-мĕш Кунне хатĕрленес ĕç ПСÇЛКС XX çул тултарнă тĕле хатĕрленес ĕçпе пĕр вăхăтра пулса пырат. Çакна кура ĕнтĕ ПСÇЛКС Тĕпкомĕ Ленинла-Сталинла комсомол ПСК(б)П йертсе пынипе мĕнле пурăнни çинчен, ун аталанăвĕнчи кашни тапхăр çинчен çамрăксен массисене анлăн ăнлантарса парас пулат, парти йертсе пынипе комсомол халăх тăшманĕсене хирĕç—фашисăмпа троцкисла-бухаринла, буржуаллă-националисла тата ытти тĕрлĕ агенчĕсене хирĕç кĕрешни çинчен сутатса парас пулат.

Праçника хатĕрленнĕ кунсенче комсомол организацийĕсем комсомолецсемпе çамрăксем хушшинчи политикăлă ĕçе лайăхлатмала, политвĕренӳ кружокĕ-шкулĕсен шутне анлăлатас тата çирĕплетес пулат, большевикла парти историне кашни комсомолец тарăннăн вĕренессине пурнăça кĕртмеле.

Малти ретри совет çамрăкĕсене комсомол ретне йăвăçтарса пырса, комсомол организацисен комсомолеçа çĕнĕрен илнисемпе политикăлă воспитанийĕ тата культурăлă-массăлă ĕçсем интерессине вăйлатас пулат, вĕсене активлă общественлă пурнăçа хăйулăнрах йăвăçтарса пырас пулат. Çакăнпа пĕрлех ПСÇЛКС Тĕпкомĕ çакна кăтартса парат: чи лайăх, тивĕçлĕ комсомолецсене ПСК(б)П ретне кĕртсе пырас тĕлĕшпе комсомол организацисем умĕнче калăма çук пысăк та паха задачă тăрат.

Пĕтĕм тĕнчери Çамрăксен Кунне промышленнăçри тата йалхуçалăхĕнчи стахановецсен рекордсене анлăлатнине, массăлă пуçарулăхпа совет çамрăкĕсенчен тăван çĕршывăмăр ăннене парнесем пама хатĕрлес ĕçе вăйлатнипе кĕтсе илес пулат.

ПСÇЛКС Тĕпкомĕ хăйĕн çырăвĕнче комсомол организацисене политикăлă тимсĕрлĕхе вĕçне çитерес пĕтерме, çемçе кăмăллă пулнине, лăпланса ларассине пĕтерме, халăх тăшманĕсене—троцкисла-бухаринла тата ытти тĕрлĕ шпионсене, диверсантсене тата сăтăрçăсене хирĕç кĕрешес ĕçе вăйлатма чĕнет.

(ТАСС).

Тырпулсене вут-кăвартан сыхлассине вăйлатмала

Колхоз уйхирĕнче тата итемсем çинче хаĵ хĕрÿлĕ ĕç пырать. Тырпулсене вырса пĕтересе кĕлтесене турттармала, авăн çапса государствăна тырă леçмеле, çĕнĕ тырра ампара хывмалă. Чылай вăхăт ĕнтĕ уйар çанталăк тăрать, йулашки кунсенче тата çил тухса вăйланчĕ. Çакă ĕнтĕ тырпулсене пушартан сыхлас ĕçе уйрăмах вăйлатма хушать.

Ку çеç те мар, сыхăлăх вăйсăрланнă çĕрте пытанса йулнă халăх тăшманĕсем хăйсен сиенлĕ ĕçĕсене те тума пултарассĕ. Тырпула вăрласа йе çĕртсе йарса, май пулсан вут тивретсе те вĕсем колхоз тыррине пĕтерме пăхассĕ. Çавăнпа та халĵхи вăхăтра колхоз уйхирĕнче тата уйрăмах итемсем çинче вуткăвартан сыхланас ĕç нихăçанхинчен вăйлă пулмала.

Вут-кăвартан сыхланас ĕç çине çиелтен кăна пăхнă пирки йулашки вăхăтра хăшпĕр колхозсенче çĕмелсем тата итемсем çунса пĕтни те пулнă. Сĕнтĕрвăрри районĕнче, нумайах та пулмасть, Чапайĕв йачĕпе тăракан колхозра пĕр çĕмел, Арманкасси Макаç колхозĕнче тепĕр çĕмел çунса кайнă.

Пăрачкав районĕнче икĕ çĕрте ыраш кĕлтисене çунтарса йанă. Бахмутовă йалĕнче йединоличник Г. Йакимăв уйа вут хурса хăварнă та, хай ыраш вырма кайсан, вут сарăлса кайса 400 кĕлте тата 0,40 гектар вырман ыраш çунса кайнă. Полибинă йалĕнче Г. Дмитрийĕв çĕмел патне пирус йулашкине сÿнтермесĕр пăрахса хăварнă пирки 830 кĕлте ыраш çунса кайнă.

Çавăн пекех Кÿл-Хĕрринчи „Трактăр“ колхозра (Вăрнар р.) пирус йулашкине сÿнтермесĕр пăрахнă пирки вут тухса вырман ыраш çуннă пулнă. Куславкка районĕнче Алĵменĕвăри колхозра витнĕ итеме çунтарса йанă. Вут тухсан çийĕнчех сÿнтерме итем çинче шыв та мтти хатĕрсем те пулман.

Колхоз пурлăхĕ—общĕствăлă пурлăх. Колхоз тырри пĕр пĕрчĕ те çухалса пĕтмеле мар. Çапла кăтартса парассĕ партипе правительствă. Анчах та хăшпĕр районсенче колхоз пурлăхне сыхлассине тырпулсене пухса кĕнĕ вăхăтра пушартан сыхланас ĕçсене тивĕçлипе йĕркелемен. Ăна çав малта кăтартнă фактсем те, уççăн кăтартса парассĕ.

Колхоз руководительĕсенчен те уйра тата итем çинче вут-кăвартан сыхланас ĕçе тивĕçлипе хакламаннисем йумай-ха. А. Григорйĕв йулташ çырса пĕлтернĕ тăрăх, „Красный трудовик“ колхозра (Сĕнтĕрвăрри р.) витнĕ итем патне пĕр витре те шыв лартман. Çавăн пекех итем çинче пушарпа кĕрешмели хатĕрсем те çук.

ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ тырпулсене пухса кĕртнĕ вăхăтра вут-кăвартан сыхланас тĕлĕшпе мĕн-мĕн тумалисене пурне те кăтартса панă. МТС директăрĕсен кашни комбайн тата молотилкă патне пушар сÿнтермели хатĕрсем памала, трактăрсем çумне хĕлхем сÿнтермелисем майлаштарса лартмала.

Кашни итем çинче кирлĕ таран шыв, витресемпе кĕреçесем пулмала. Авăнсемпе тырă типĕтмелисене йалан асăрхаса тăрса, вут-кăвар тухас хăрушлăх палăрсан, çийĕнчех йусамала.

Социалисăмлă пурлăха, колхоз тыррине сыхлас ĕç кашни колхозникпа колхозницă ĕçĕ. Ку ĕçре колхозниксен йăнчен сыхăлăх вăйлă пулмала. Уй хуралĕсемпе итем çинчи хуралсем умĕнче ку вăхăтра уйрăмах пысăк ответлăх тăрать. Çав ĕçе ĕçре тĕрĕсленнĕ, тÿрĕ, колхоз пурлăхĕшĕн пĕтĕм чĕререн тăрăшакан колхозниксене тăратмала. Çапла тусан çеç халăх пурлăхне сыхлама пулать.

Йалхуçалăх ĕçĕсене пысăк пахалăхпа вĕçлет

ВĂРНАР. Малтикасри „Пĕрлешÿ“ колхоз йулашки çулсем хушшинче хуçалăхпа организаци йенчен çирĕпленес тĕлĕшпе тата тырпул тупăшне ÿстерес ĕçре пысăк ÿсĕмсем турĕ.

Колхоз хăçалхи вăйлă тырпула вăхăтра пĕр тăккаламасăр пухса кĕртессинче те паха тĕслĕхсем кăтартрĕ. Çурхи ĕçсене тунă пекех тырпула пухса кĕме малтанах ĕç планĕ тунă. Вăл планра мĕн чухлĕ тырă, мĕн чухлĕ утă-улăм пухса кĕмеллине, хăш участкăра хăш бригадăн ĕçлемелине лайăх кăтартса панă.

Колхозра пĕтĕмпе 3 бригадă. Бригадăсене машинăсемпе ĕç лашисене пĕр пек валеçсе çирĕплетнĕ. Кашни бригадă тата звено харпăрхăй участкинчи ĕçсемшĕн ответлă. Ĕçре вĕсем пĕр-пĕрипе ăмăртассĕ.

Çапла ĕçленипе колхоз кĕрхи тырăсене 5 кун хушшинче, планпа пăхнинчен 2 кун малтан, лайăх пахалăхпа вырса пĕтерчĕ. Кĕрхи тырăсене халĵ пĕтĕмĕшпе капана хывнă. Пĕтĕм ыраш лаптăкĕнчен 50 процентне çапнă та ĕнтĕ. Ыраша çапса пăхнă тăрăх, кашни гектартан 20—21 центнĕр тĕштырă тухать.

Колхоз çуртрисене вырма ийулĕн 28 мĕшĕнче тухса, 9 кун хушшинче, планпа пăхнинчен 1 кун малтан, вырса пĕтерчĕ. Малтанлăха çапса шутласа пăхнă тăрăх, çĕлĕ кашни гектартан вăтам шутпа 21—22 центнĕр тухать.

Колхозăн 2 жнейкă, 1 лобогрейкă пур. Ку машинăсемпе тырпула пухса кĕртес ĕçре колхоз анлăн усă курнă. Жнейкăпа выракансем Г. Матвейĕв, И. Йакавлĕв (1-мĕш бригадă), И. Арсентийĕв (2-мĕш бригадă) кулленхи нормăна 120—140 процент, З. Моисейĕв, П. Петров (3 мĕш бригадă) лобогрейкăпа выраса кулленхи нормăна 160—170 процент ытла, тултарса пынă.

Кĕлтесем çыхас ĕçре Матвейĕвă, М. Платонăвă, 90 çулхи Андрейĕвă, 75 çулхи Прокопийĕвă т. ыт. колхозницăсем те уйрăмах тăрăшса ĕçлĕрĕç. Кĕлте турттарас ĕçре Й. Алексейĕвпа Н. Николайĕв йулташсем кулленхи нормăна 130 процент ытла тултарассĕ.

„Пĕрлешÿ“ колхозра политикăлă-масăллă ĕçе те лайăх йĕркеленĕ. Кашни бригадăрах агитатăрсемпе политвулавçăсем ĕçлессĕ. Агитатăрсемпе политвулавçăсем колхозниксем канна вăхăтсенче хаçатсем вуласа парассĕ, тĕрлĕ ыйтусем тăрăх калаçусем туса иртерессĕ. Ку ĕçре уйрăмах Н. Аниçимăв, Н. Николайĕв, Н. Калашникăв тата вулав çурчĕн пуçлăхĕ Ф. Николайĕв йулташсем хастарлăн ĕçлесе пырассĕ.

Кашни бригадăн тата колхозăн çтена хаçачĕсем йĕркелĕ тухса тăна Бригадă хаçачĕсенче, бригадăри стахановецсен ĕçĕсене куллен çутатса панипе пĕрлех, бригадăна кайала туртакансемпе те вăйлăн кĕрешсе пынă.

Колхоз кĕрхи акана пур йенчен те хатĕрленсе çитнĕ. Плугсемпе çейăлкăсене йусаса, тасатса лартнă. Акмали çĕре пĕтĕмĕшпех имçамсемпе çемçетсе çитернĕ. План тăрăх кĕрхи тырăсене 7 кун хушшинче акса пĕтерме пăхнă. Акасине пĕтĕмĕшпех çейăлкăсемпе акассĕ. Тырă акакансене кашнинех уйрăм çейăлкăсем çумне çирĕплетнĕ.

Ст. Улангай.

Кĕрхи тырăсене акмали срук тата акмали нормăсем çинчен

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнче

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ йышăннă тăрăх, кĕрхи тырăсене акма районсене икĕ ушкăна уйăрнă. Малтанхи, çурçĕрти ушкăна: Тугаркас, Ишлей, Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри, Куславкка, Вăрмар, Çĕрпÿ, Трак, Йлĕк, Йетĕрне, Хĕрлĕ Чутай, Çĕмĕрле, Вăрнар, Шăхасан, Канаш тата Тăвай районĕсем кĕрессĕ. Çак районсенче кĕрхи тырăсене августăн 19—24-мĕш хушшинче акмала.

Иккĕмĕш, кăнтăрти ушкăна: Йĕпреç, Йелчĕк, Патăрйел, Шăмăршă, Шăнкăртам, Турхан, Улатăр, Кувакинă тата Пăрачкав районĕсем кĕрессĕ. Çак районсен кĕрхи тырăсене августăн 17—23-мĕш хушшинче акмала.

Çавăн пекех Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ çав ушкăнсем тăрăх, пĕрремĕш класлă вăрлăха акмали нормăна та кăтартса панă.

Çурçĕрти ушкăнри районсенче „Авангард“ тата „Вятка“ кĕрхи ыраша 1,5—1,6 центнĕр, „Дюрабль“, „Симбирски“ кĕрхи тулăсене тата ырашпа тулă гибридне—1,65—1,75 центнĕр, „Лютесценс 0329“, „Лютесценс 1060/10“, „Мильтурум“ 1,6—1,7 центнĕр акмала (гектар пуçне).

Кăнтăрти ушкăнри районсен „Авангард“ тата „Вятка“ суртлă ыраша 1,45—1,55 центнĕр, „Дюрабль“, „Симбирский“ кĕрхи тулăсене тата ырашпа тулă гибридне 1,6—1,7 центнĕр, „Лютесценс 0329“, „Лютесценс 1060/10“, „Мильтурум“—1,55—1,65 центнĕр акмала.

Çак вăтам нормăсем тăрăх райçĕрĕç пайĕсен кашни колхоз валĵи акмали нормăсене кăтартса памала.

Кĕрхи тулăна акана тухсан малтанхи кунсенчех акмала, ăна икĕ кун хушшинче акса пĕтермеле. Кĕрхи тулăна лайăх çемçетнĕ, хура çĕртме тата ирхи çĕртме туна участкăсем çине акас пулать.

Вăрлăхлăх участкăсене паха вăрлăхпа акса хăвармала. Çавăнпа та малтан вăрлăхсене тасатса суртламала, триумф, трийĕр витĕр кăлармала. Вăрлăх йурăхсăр пулсан, суртлисемпе улăштармала. Иртнĕ çулхи вăрлăхсемпе пĕтĕмпех усă курмала. Райçĕрĕç пайĕсен тата машинă-тракторлă станцисен вăрлăхсен пахалăхне августăн 15-мĕшĕнчен тĕрĕслесе çитермеле.

Кĕрхи тулăна тата ыраша пĕтĕмпех вутпуççисенчен чÿкесе акмала. Августăн 13-мĕшĕнчен кайа йулмасăр çейăлкăсене йусаса çитерсе, вĕсемпе мĕн чухлĕ акмали нормăна палăртса хумала. Кашни çейăлкă çумне лайăх ĕçлекенсене уйăрса çирĕплетмеле. Кĕраки вăхăтĕнче çейăлкăсемпе туллин усă курмала.

Колхоз правленисен тата бригадирсен акмали нормăна мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине кашни кун тĕрĕслесе пымала. Кăтартнă нормăсемпе срuксене пăхăнса ĕçлемелле.

Хĕресле тата ансăр ретпе акассине массăлăн иртермеле. Вăрлăхлăх участкăсем çинче кĕрхи тулăна çумкурăксенчен тата урăх тĕрлĕ суртлă тырăран тасатма лайăх пултăр тесе çейăлкăна пĕрне тухнă хыççăн 25—30 сантиметăр сарлакĕш çул хăвармала.

Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ райçĕрĕç пай пуçлăхĕсене тата МТС-сене вăрлăхлăх акмали участкăсене тĕрĕс уйăрнине, вăрлăхлăх участкăсем çине акмали вăрлăхсен пахалăхне тĕплĕн тĕрĕслесе тухма хушнă.

Малта пыракан колхозсенче

Шăхасан районĕнчи Çĕн Челкасси йалсоветне кĕрекен „Прожектор“, Калинин йачĕпе тăракан, Уйкас Кипек йалсоветĕнчи Куйбышĕв йачĕпе тăракан, Ентрийал йалсоветĕнчи „Пинер“ колхозсем уйри тырпулсене пуçтарса кĕрес тĕлĕшпе районра малта пырассĕ. Çак колхозсем уйри тырпулсене пĕтĕмпех йăнăçлăн вырса пĕтерчĕç. Çавăн пекех государствăна, МТС-не натурплатă шучĕпе ыраш парса татрĕç. Ыраш кĕлтисене турттарса, капана хывса çитернĕ. Халĵ вĕсенче çуртри кĕлтисене турттарассĕ, авăн çапассĕ, кĕрхи тырăсене акса хăварма хатĕрленесçĕ.

Колхозсенче ăмăртса ĕçлени, стахановла йухăма сарса пыни тырпулсене кĕске срукрах уйăран пуçтарса кĕме пулăшрĕ. „Пинер“ колхозра М. Денисăв йулташ жнейкăпа 10-шар гектар тăран вырса пычĕ.

Çÿлте асăннă колхозсем акма ыраш, кĕрхи тулă вăрлăхĕсене лайăх тасатса хатĕрленĕ. Кĕрхи тырăсене акмали участкăсене те тĕплĕн çемçетнĕ.

Петров.

Гектартан 160 пăт ыраш

Вăрманкасри (Вăрнар р.) „Самолĵот“ колхозри бригадăсем кăçал вăйлă тырпул туса илессишĕн пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлерĕç. Пур бригадăсенче те агротехникăлă ĕçсене вăхăтра тата тĕрĕс туса пынă. Уйри тырпулсене кĕске срукрах, тăккаламасăр пуçтарса кĕвĕ. Малтан çапса пăхнă тăрăх, вăтам шутпа гектартан 160 пăт ыраш тухать.

„Самолĵот“ колхозри бригадăсем çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешме тытăннă. Ыраш тата кĕрхи тулă акса хăвармали участкăсене тĕплĕн, лайăх çемçетнĕ. Суртлă вăрлăхсем хатĕрленĕ. Вăрлăхсене пĕтĕмпех вутпуççирен чÿхесе, çейăлкăсемпе акса хăварассĕ.

Çейăлкăсемпе ĕçлеме чи паллă колхозниксене уйăрса çирĕплетнĕ.

А. Майорăв.

Çĕнĕ вĕренÿ çулĕ пуçланас умĕн

ЕЛĔК. Шĕмшешри вăтам шкул (директăрĕ В. Шекелĵов) çĕнĕ вĕренÿ çулне ачасене каникула йанă хыççăнах хатĕрлеме тытăннă. Вĕренÿре кирлĕ хатĕрсене — хут, кăранташ, перо, чернил т. ыт. те çителĕклĕ илсе хатĕрленĕ. Шкул библиотеки валĵи тĕрлĕрен кĕнекесем 2080 тенкелĕх илнĕ. Çĕмрĕк партăсене йусаттарнă, çĕнĕрен 100 партă, 8 доска тата сĕтел-пукансем илнĕ, 6 кăмака йусаттарнă, 4 кăмака çĕнĕрен тунă. Кунсăр пуçне тата кашни класах штукатуркă тунă. Çак кунсенчех çĕнĕрен тепĕр шкул тума тытăнассĕ.

Кĕркуннехи испытанине хăварнă ачасене валĵи учителĕсем расписани тăрăх ернере 3 хут консулĵтацисем туса иртерессĕ. Вĕренÿ çулне хатĕрленес ĕçре вĕренекенсем те активлăн хутшăнассĕ.

Анчах Елĕк райçутĕç пайĕ пайанхи куна çитсе те шкулсене методикăлă пособисемпе программăсем çитермен-ха.

Ник. Андрейĕв.

*

ШĂХАСАН. Çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленес ĕç районра йапăх тăрать. Чылай шкулсем тетрадсем, кăранташсем, ручкă-перосем илнисĕр пуçне нимĕнех те туман. Акă, сăмахран, Ентрийалĕнчи туллимар вăтам шкул (директăрĕ Михайлăв) шкулăн кăмакисене тата урайĕсене йусаттарман, кантăксем ванчăк. Тури Сурăмри туллимар вăтам шкул (директăрĕ Иванов) вĕрену çулне хатĕрлеме халĕ те тытăнман. Ухманри туллимар вăтам шкулăн 4-мĕш клас валĵи çурт çитмест. Чылай шкулсенче ремонт ĕçĕ укçатенкĕ çуккипе тытăнса тăрать. Шывпуç, Чалкасси, Кипеч шкулĕсене банкăн Шăхасанти уйрăмĕ тивĕçлĕ укçана памасăр тытса тăрать.

Анчах та учебниксем çителĕклĕ мар, мĕн пурĕ те 2000 тенкелĕх кăна кÿрсе килнĕ. Вĕсенче те вырăс тата чăваш чĕлхисене вĕренмели учебниксем çук, кĕçĕн классем валĵи пачах та сахал.

Вутă кÿрес ĕç те вăраха йулса пырать. 4684 кубла метр кăна кÿнĕха. Вăтам шкулсем валĵи учителĕсем çитмессĕ.

Çĕнĕ вĕренÿ çулĕ пуçланасси нумай йулмарĕ. Çак çитес кунсенче ĕçри çитменлĕхсене пĕтерсе, сентабĕрĕн 1-мĕшĕнче ачасене кĕтсе илме хатĕр пулмала.

С. Соколов

Кĕлтесене турттарса пĕтерчĕç

Йелчĕк районĕнчи „Комбайн“ колхозра 1-мĕшпе 3-мĕш бригадăсем ытти бригадăсенчен малтанрах вырса пĕтерсе, августăн 7-мĕшĕнче ыраш кĕлтисемпе пĕрле çуртрисене те капана хывса çитерчĕç.

Кĕлтесене уйар çанталăкра капана хывса çитерни тăкаксемпе кĕрешес тĕлĕшпе уйрăмăнах лайăх пулчĕ. Кĕлте турттарас ĕçре çак колхозниксем хытă тăрăшса ĕçлерĕç: 1-мĕш бригадăри колхозниксем А. Новикăв, И. Федăрăв тата Д. Александрăв йулташсем хăйсен ĕç кормине куллен икĕ хут ытларах тултарса пычĕç. Нормă тăрăх 12 лав турттармала пулнă пулсан, вĕсем 24—25-шер лав турттарчĕç, 3 мĕш бригадăра ĕçлекенсем Н. Ивановпа А. Гаврилăн йулташсем те вĕсенчен йулмарĕç.

Халĵ колхозра авăн çапас ĕç пырать.

Й. Кириллăв.

Мускаври „Компрессор“ савăтри комсомолĕцсем чĕнсе калавипе Инçет-Хĕвелтухăç крайĕнчи вăрманхозсенче ĕçлеме кăмăл тунă çамрăк стахановецсен пĕрремĕш ушкăнĕ Хабаровска çитнĕ.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран): И. Д. Токарĕв, П. Ф. Пискунов, Ф. Н. Паршин, И. И. Жукăв тата В. Й. Греков йулташсем.

Г. Ложкин фото-ÿкерчĕкĕ (Сойузфото).

Колхозсенчи таварлă сысна фермисенчи ĕçе организацилессипе ĕçшĕн тÿлес çĕнĕ йĕрке

Пирĕн колхозсем тырпул тухăçне хăпартса пынипе пĕр вăхăтрах, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес йенĕпе те пысăк çĕнтерÿсем туса пырассĕ. Йулашки тăватă çул хушшинче Совет Сойузĕ тăрăх сыснасен хисепĕ 123 процент ÿснĕ. Çак вăхăтрах фермăсенчи сыснасен йратлăхне лайăхлатас йенĕпе те чылай пысăк ĕçсем туса иртернĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, вĕсен пахалăхне лайăхлатса пырас ĕçре халăх тăшманĕсем сиенлемен пулсан пирĕн çитĕнÿсем халĵхинчен те пысăк пулмала пулнă. Троцкисла-бухаринла, буржуалă-националисла бандитсем, хăйсен фашисла хуçисен заданийĕсем тăрăх, выльăх-чĕрлĕх пахалăхне лайăхлатассине чăрмантарнă, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме панă государствă планне хирĕç пынă, фермăсемпе кĕтÿсенче йĕрекеç чирсем сарнă, выльăх апачĕ никĕсне тума чăрмантарнă, фермăсенче ĕçлекенсене ĕçшĕн тÿлессин социалисăмлă принципне пăсса пынă т. ыт. те.

Колхозсенчи таварлă сысна фермисенче йулашки вăхăтченех йалхуçалăх ертелĕн сталинла уставне кирĕçле инструкци тăрăх ĕçлесе пынă. Кивĕ инструкци фермăсенче ĕçлекен колхозниксен хушшинче стахановла йухăма сарса пыма чăрмантарнă, фермă ĕçне пăтраштарнă.

Çак иртнĕ кунсенче ССРС Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ „Колхозсенчи таварлă сысна фермисенчи ĕçе организацилессипе ĕçшĕн тÿлесси çинчен инструкци“ çирĕплетнĕ. Çĕнĕ инструкци тăрăх, колхоз правленисем колхоз членĕсенчен сысна фермисенче ĕçлесе тăмашкăн висĕ çуллăхран кайа мар йаланлăх бригадăсем уйăрассĕ. Сысна фермисенче ĕçлекен кашни бригадăна колхоз правленийĕ фермăри сыснасене, вĕсене пăхма кирлĕ хатĕрсем тата кÿлсе çÿремели таврашсем, сыснасене усрамалли çурт-йĕресене уйăрса парать.

Пысăк фермăсенче темиçе бригадă та пулать. Кашни бригадăн 21—24 пуç таран сысна амисемпе вĕсен çÿрисене пăхса усрамала. Бригадирсемпе фермă пуçлăхĕсене колхоз правленийĕ икĕ çуллăхран кайа мар вăхăта лартать.

Фермăра пĕр бригадă çеç ĕçлет пулсан, ун пек фермăсенче бригадир—вăлах фермă пуçлăхĕ пулса тăрать.

Фермăра ĕçлекен колхозниксем хушшинче ĕçе бригадир хăй, йалхуçалăх ертел уставĕн 14 мĕш пунктинче хушнă пек, валеçсе парать. Колхоз правленийĕ фермăра ĕçлекен бригадăсем валĵи çулталăк хушши ĕçлесе тăмашкăн производствăлă задани туса парать.

Колхозсенчи таварлă сысна фермисенче ĕçлекен бригадăсенчи колхозниксен ĕçне сакĵшчинă тăрăх, продукци хисепĕпе унăн пахалăхне кура ĕçкунĕ шутласа парассĕ. Йалхуçалăх ертелĕн уставĕ тăрăх, колхоз правленийĕ сысна фермине ĕçлекен колхозниксен ĕç нормине тата кашни ĕçкунĕпе шутласа мĕн чухлĕ тăнине тăвать, ăна колхозниксен пухăвĕ пăхса тухса çирĕплетет. Ĕç норми тăрăшса ĕçлекен колхозник тума пултарнă нормă чухлĕ пулмала. Нормăсене тунă чухне выльăхсен пахалăхне, оборудованийĕ тата фермăна механизацилениве шута илмеле.

Фермăра ĕçлекен пĕр колхозникăн 7—8 пуç таран сысна амисемпе вĕсен çурисене пăхса тăмала. Колхозник хăйĕн çумне çирĕплетсе панă çурăсене сутиччен йе вĕсене кĕтĕве куçариччен пăхса тăрать.

Пысăк фермăсенче, çамрăк çурăсене тăрантарма уйрăм çынна хушма май пур çĕрте, 3—4 уйăхран иртнĕ çурăсене тăрантаракан уйрăм çын пулмала. Кун пек чухне сыснасем пăхакан ĕç норми 10—12 пуç сысна ами таран пулмала.

Сыснасен шучĕпе вĕсен пахалăхне лайăхлатма кирлĕ условисене туса парас тесе, фермă ăшĕнчи урăх ĕçсене туса тăма (сыснасем валĵи апат-çимĕç, сыснасем айне сарма улăм кÿрсе килие, фермăна ăшăтма, шыв кÿме, витери тислĕке кăларма, шыв ăшăтма т. ыт. ĕçсене туса тăма) уйрăм работниксене хурса парассĕ. Çав работниксене фермăра ĕçлекен бригадăри çынсенчен уйармала. Пĕчĕк фермăсенче, фермă ăшĕнчи ĕçсене туса тăма уйрăм работниксене кунĕпе ĕçлеме ĕç çителĕклĕ мар пулсан, ун пек чухне колхоз правленийĕ кăна фермă тулашĕнчи ĕçсене те тума хушать.

Çуллахи вăхăтра, сыснасене кĕтÿре çÿретнĕ чухне, колхоз правленийĕ сысна пăхакансене пулăшма кĕтÿçсем уйăрса парать.

Бригадире те сыснасене пăхасшăнчен хăтармассĕ. Унăн хăй çумне çирĕплетсе панă сысна амисемсĕр пуçне та бригадă çумне çирĕплетсе панă сысна аçисене пăхмала.

Пĕр бригадăлă сысна фермисенче сысна ами 15 пуçран та ытла пулсан, ун пек фермăсенче вара бригадирсем сысна амисене пăхасшăнчен хăтăлассĕ.

Малала ĕçшĕн тÿлесси çинчен.

Сысна пăхакансене сысна çурисем мĕнле пăхса çитĕнтернине тата вĕсен виçи хутшăнса пынине кура ĕç кунĕ тÿлессĕ.

Сысна пăхакансем çумне çирĕплетнĕ сысна амисенчен икĕ виçĕ уйăх тунă тĕле кашни çурă 12 килограм таран туртать пулсан—2,5 ĕçкунĕ, 12 килограмран та ытларах пулсан—4,5 ĕçкунĕ шутласа парассĕ. Кунсăр пуçне сысна пăхакансем çумне çирĕплетсе панă кашни сысна амиччен вăтам шутпа çулталăк хушшинче 12 çурăран мала илнĕ кашни çурăшăн сысна пăхакансене 1,5 ĕçкунĕ хушса парассĕ.

Сыснасен пăрăшне ÿстерсе пынăшăн ĕçкунĕсене çапла тÿлессĕ: сыснан чĕрĕ виçи центнĕр туртать пулсан, кашни центнĕршĕн 10 ĕçкунĕ тÿлессĕ. Кунсăр пуçне, мăнтăрлатнă кашни сыснан чĕрĕ виçи 80—100 килограмран кайа мар пулсан 5 ĕçкунĕ тата кашни йратлă сысна çуришĕн вĕсене çуралнă хыççăн 4 уйăх тултариччен сутман пулсан—5 ĕçкунĕ парассĕ.

Сыснан чĕрĕ виçине ÿстерсе пынăшăн ĕçкунĕсене аш-какай хатĕрлев шучĕпе государствăна панă чухне, фермăри сыснасемпе çурăсене сутнă чухне, çурăсене кĕтĕве куçарнă чухне тата колхоза валĵи пуснă чухне шутласа парассĕ. Сыснасене уйăхра пĕрре виçсе тăракан фермăсенче йе тата кашни уйăхрах сыснасен чĕрĕ виçине виçсе тăма май пур фермăсенче, сыснасен чĕрĕ виçине турттарса пĕлнĕ тăрăх ĕçкунĕ шутласа парассĕ.

Фермă пуçлăхĕсене—бригадирсене, фермăра амă сысна 15 пуçран маларах пулсан; тата пысăк фермăсенчи бригадирсене хăйсем çумне çирĕплетсе панă сысна амисемпе вĕсен çурисене пăхнăшăн, сысна пăхакансем валĵи тунă ĕç расценки тăрăх ĕçкунĕ тÿлессĕ.

Кунсăр пуçне, вĕсем çумне çирĕплетнĕ аçа сыснапа чуптарнă кашни амашăн 1,5—2 ĕçкунĕ шутласа парассĕ. Фермăри ĕçсене йĕртсе пынăшăн—бригадă членĕсем хăйсем ĕçлесе илнĕ пĕтĕм ĕçкунĕнчен шутласа 20—30 процент таран бригадирсене парассĕ.

Пысăк фермăсенчи фермă пуçлăхĕсене пĕр кун ĕçленĕшĕн 1—1,5 ĕçкунĕ таран, фермăн пысăкĕшĕпе ĕçленин стажне тата квалификацине пăхмасăрах, шутласа парассĕ. Кунсăр пуçне, фермă пуçлăхĕсене кашни самăртнă сыснашăн унăн чĕрĕ виçи 80—100 килограмран кайа мар пулсан, 1—2 ĕçкунĕ таран парассĕ.

Выльăх-чĕрлĕх техникне тата выльăх фелĵшерĕсене, вĕсен ĕçĕпе стажне тата квалификацине хисепе илмесĕрех, пĕр кун ĕçленĕшĕн 1—1,5 ĕçкунĕ таран шутласа парассĕ.

Фермăра ĕçлекен ытти работниксене (инструкцире кăтартман работниксене) ĕçшĕн тÿлемелли расценкăна вырăнти условисене кура колхоз правленисен хăйсен тумала та, ăна колхозниксен пухăвĕнче çирĕплетмеле.

Колхозсенчи таварлă сысна фермăнчи бригадăсем хăйсен çумне çирĕплетсе панă сыснасене мăнтăр пăхса ÿстерессĕ пулсан, çамрăк çурăсене пĕтĕмпех пăхса ÿстерессĕ пулсан, вара колхоз правленийĕ кун пек бригадăсенчи пур колхозниксене те йалхуçалăх ертел уставĕн 15-мĕш пункти тăрăх, çулталăк вĕçĕнче, вĕсем ĕçлесе тунă мĕн пур ĕçкунĕсен çумне 10 процент таран хушса памала, бригадăри чи паллă ударниксене—15 процент таран, бригадирпе фермă пуçлăхне—20 процент таран хушса памала.

Таварлă сысна фермине ĕçлекен бригадăри колхозниксем начар ĕçленĕ пирки вĕсен сыснасем ырхан пулсан, çамрăк çурăсене сахал усрассĕ пулсан,—вара колхоз правленийĕ çав бригадăра ĕçлекенсенчен вĕсем ĕçлесе тунă мĕн пур ĕçкунĕсенчен 10 процент таран тытса йулать.

Халĕ партипе совет организацийĕсемпе çĕрĕç органĕсем умĕнче тăракан задачă вăл—çĕнĕ инструкци çинчен анлăн ăнлантарса паресси, ăна кашни колхоза çитерсе паресси, кашни таварлă сысна фермисенчи ĕçе çĕнĕ инструкци хушнă пек йĕркелесси пулать.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

ПСК(б)П Обкомĕнче

Августăн 3-мĕшĕнче парти Обкомĕн бюровĕ учебниксем кăларас ĕç мĕнле пыни çинчен ыйту пăхса тухрĕ: бюро çакна палăртса. Чăвашгиз управляющийĕ Васильев, Çутĕç Халăх Комиссарĕ пулнă Осипăв, Полиграфтрест директорĕ Никифăрав йулташсем ĕç çине ответсăрăн пăхнă пирки, учебниксене вăхăтра кăларас си пурнăçа кĕмест. ПСК(б)П Обкомĕн бюровĕ кăçалхи июнĕн 9-мĕшĕнче йышăннă решенипе Васильйева, Осипăва тата Никифăрава, вĕсем учебниксене вăхăтра кăларассишĕн кашни уйрăмăн ответлă пулни çинчен асăрхаттарнă пулнă. Апла пулин те вĕсем хăйсен ĕçне урăхлатса çĕнетмен. Августăн 1-мĕш тĕлне 5 учебник кăна кăларнă, 38 алçырăвĕ хатĕрленĕ, 26 редакциленĕ, производствăна 23 алçырăвĕ кăна панă.

Çутĕç Халăх Комиссарĕ пулнă Осипăв йулташ учебниксем кăларас тĕлĕшпе парти кăтартăвĕсене хаклямасăр тăнă. Вăл 1938 çулта учебниксем кăларас плана 1937 çулта çырса хатĕрленĕ кĕнекесене те кĕртнĕ.

Чăвашгиз учебниксен алçырăвĕсене производствăна парас срукĕсене тăтăшах пăсса пынă. Шупашкарти типографи учебниксем кăларас ĕçе пурнăçласа пыраймаст. Чăвашгиз типографине панă 13 учебникрен халĕхи вăхăтра 3 учебник кăна кăларнă. Полиграфтрест типографине материалсем парса çитермен.

ПСК(б)П Обком бюровĕ Чăвашгиз управляющийне А. Васильева тата Полиграфтрест директорне А. Никифăрава, учебниксем пичетлесе кăларассине аркатса йанашăн, ĕçрен хатарма йышăннă. Вĕсене партилĕ ответлăх тыттарасси çинчен тăракан ыйтăва Чăвашгиз тата типографи çумĕнчи пуçламĕш парторганизацисене пăхса тухма панă.

Чăваш АССР Прокуратурине учебниксем кăларас ĕçе аркатса йанине тĕрĕслеме, сăмахран, çак ĕçре Çутĕç Халăх Комиссарĕ пулнă Р. О. Осипăван сăтăрла ĕçĕсем çинчен тĕрĕслеме тата айăплисене ответ тыттарма хушнă.

Чăвашгиз управляющийĕ пулма Обком бюровĕ В. И. Железков йулташа çирĕплетнĕ, ăна ПСК(б)П Обкомĕн шкул, наукă тата изобретенисен пайĕн инструкторĕн ĕçĕсенчен хăтарнă. Бюро Железков йулташа мĕн пур учебниксене çĕнтабĕрĕн 1-мĕш тĕлне кăларассине пурнăçа кĕртме хушнă.

Халăх Комиссарĕсен Советне Полиграфтреста пĕтерес ыйтăва татса хума хушнă.

Бюро Çутĕç Халăх Комиссарне Харитонăв йулташа учебниксене пурне те, çав шутрах вырăсларан куçарнисене те, производствăна августăн 10—12-мĕшĕнчен кайа йулмасăр памала тума хушнă.

Бюро ПСК(б)П райкомĕсен секретарĕсене Шупашкарти типографине районри типографисенчен пĕрер икшер çын наборщиксем йарса Чăвашгиза пулăшма хушнă.

Парти райкомĕн постановленине кĕтсе...

Патăрйел районĕнчи „Октябĕр йалавĕ" хаçат июньпе июль уйăхĕсенче парти пурнăçĕ çинчен пĕр заметкă анчах пичетлесе кăларнă. „Октябĕр йалавĕ" хаçат редакцийĕ парти пурнăçĕ çинчен çутатассине çакăн пек хакламасăр тăни йăлтах тĕлĕнтерет.

— Парти пурнăçĕ çинчен мĕншĕн çырмастăр, — тесе ыйтсан:

— Заметкăсем, статйасем çук, коммунистсем çырмаççĕ,—тет райхаçат редакторĕ Степанăвă йулташ. Малала вăл заметкă çырма калаçса татăлнă коммунистсен йачĕсене асăнат.

„Парти пурнăçĕ çинчен материалсем çырма коммунистсене поручениеæм панă, а вĕсем ăна пурнăçламан... Апла пулсан, ĕçĕ те пĕтрĕ. Хаçатра парти пурнăçĕ çинчен çырманшăн редакци айăплă мар". Çакăн пек шухăш сийĕнлĕ шухăш.

— Нумайах пулмасть-ха парти райкомĕн заседанийĕнче парти вĕренĕвĕ районра йепле пыни çинчен сўтсе-йаврĕç, редакци çав постановленийе хаçатра пичетлесе кăларма шухăшлать, анчах темшĕн кўрсе памарĕç-ха вăл постановленийе,—тет Степанăвă йулташ.

Парти пурнăçĕ çинчен районри хаçатăн кашни номерĕнчех çырса пымалине манма йурамасть. Материалсем çук тени—тĕрĕс мар. Редакцинче ĕçлекен йулташсем районри пуçламĕш парторганизацисемпе, уйрăм коммунистсемпе таччăн çыхăнса ĕçлесе пырсан, хаçата çырса тăракан автăрсем нумайланĕç, материалсем те çителĕклĕ пулĕç. Парторганизаци тата коммунистсен ĕçĕнчи çитĕнўсемпе çитменлĕхсене хаçатра тĕплĕн çутатса пырасси—чи пысăк задач пулать.

Н. К.

Суту-илў организацисенче ĕçлекен коммунистсен пухăвĕ

Августăн 9-мĕшĕнче Шупашкар хулинчи суту-илў организацисенче ĕçлекен коммунистсемпе комсомолецсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ суту-илў пирки йышăннă решенийе пурнăça кĕртесси çинчен Суту-илў Халăх Комиссарĕн Иванов йулташăн докладне итлерĕ. Докладчик тата превире тухса калакан коммунистсем те суту-илў организацисем ПСК(б)П Обком решенийе йапăх пурнăçлани çинчен чарăнса тăчĕç, хăйсен ĕçĕнчи йанăшсене критиклерĕç.

Шупашкарти чылай магазинсемпе ларйоксенче кулленхи кирлĕ таварсене (спичкă, махоркă, тăвар, сахăр т. ыт.) сутас ĕçе йĕркелемен. Ку таварсем складсенче ытлашшипех выртаççĕ. Чеботргăн 1-мĕш №-лĕ магазинĕнче сахăр, тăвар, спичкă, махоркă т. ыт. те çук. 9-мĕш №-лĕ ларйокра сушкă, вермишель, пăрăç, уксус тавраш тупса илме çук. Иртнĕ çулта „Бакалея" магазинĕ лайăххăрах ĕçлетчĕ. Халĕ вăл та питĕ йапăх ĕçлет.

Хула хĕррисенчи ларйоксем пушшех начар ĕçлеççĕ. Кунта вĕçемсĕр черет. Спирт савăтĕнчи ларйокра çакăра пĕр сехет хушши кăна сутаççĕ Ларйокра урăх нимĕн те çук. „Ларйок пĕчĕккĕ, вырăн çук", тет ларйок заведуйушчийĕ.

— Пахча-çимĕçсемпе тата фруктăсемпе сутă тăвасси çинчен сахал мар калаçаççĕ, анчах ку ĕçе организациленĕ çук. Шупашкарта пулă хуçалăхĕ пур, анчах пулă çук. Акă тата гитарăпа балалайкăсене хамăр республикăрах тăваççĕ. Вĕсене Ленинград хулине те йараççĕ. Анчах пирĕн суту-илў организацисем хамăр республикăра тунă гитарăпа балалайкăсене Ленинграда кайса илсе килеççĕ,—тесе тĕлĕнет Петровă йулташ.

Пахча-çимĕçсемпе суту-илў тăвассине организациленипе пĕрлех, вăл çимĕçсене хĕлле валли те кирлĕ таран хатĕрлес пулать. Çаванпа ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ суту-илў çурчĕсене ремонтлассине августпа çĕнтабĕр уйăхĕсенче тума хушнă. Чеботргра ĕçлекенсем пахча-çимĕçсене усрамали складсем тăвасси çинчен вĕçĕмсĕр калаçаççĕ, анчах хăйсем халĕ тин йăвăç турттарма тытăннă.

Столовăйсем начар ĕçлеççĕ тата вĕсем пит çителĕксĕр. Чăвашсойузăн августăн 15-мĕшĕ тĕлне çĕнĕ ресторан туса пĕтермеле пулнă. Халĕ ку ресторанăн проекчĕпе сметисене те çирĕплетсе çитермен.

Çăкăр пĕçерсе сутас ĕçе те ку таранччен йĕркелемен. Акулăв йулташ (Заготзерно): пирĕн çавăн чул, кун чул запас çăнăх пур, тесе мухтанма пăхрĕ. Анчах Шупашкарта 1 тенкĕ те 70 пуслăх шурă çăкăр çителĕксĕррине пытарма май çук Кунта пакăлтатни мар, çăкăра лайăх пĕçерсе сутас ĕçе организациленĕ кирлĕ.

Суту-илў организацисем кадр хатĕрлес тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Кăçал пĕтĕмпе те курс урлă 25 повăр çеç кăна вĕрентсе кăларнă. Вĕсенчен те 25 процент çеç повăр пулса ĕçлеççĕ. Мĕншĕн тесен курса кунсăра ĕçлекен работниксене мар, илтниксене тата ытти тĕрлĕрен ĕçре пухнă. Ку çынсем курсран вĕренсе тухнă хыççăнах урăх ĕçе кайнă. Суту-илў организацисем çынсене тĕрĕслемесĕрех ĕçе илеççĕ. Чеботорг магазинĕсенче, ларйокĕсенче таçтан килнĕ çынсем нумай. Вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем укçа çаратнă та тухса шăваннă. Шырасан та тупма хĕн вĕсене. Адрĕсĕсем çук, хăшпĕрисен хушамачĕсем йе ашшĕ йачĕсем çук. Çапла Захарăвă 560 тенкĕ растратă тунă та тухса кайнă. Ун йачĕ палла мар, адрĕсĕ çук 18-мĕш №-лĕ ларйок заведуйушчийĕ Посажникăвă та растратă туса тухса тарнă. Унăн та адрĕсĕ çук. Петров та çавăн пекех 2 277 тенкĕ растратă туса тухса шăваннă. Кун пек фактсем темĕн чухлĕ. Çавăнпа растратă пĕртте чакмасть.

Судпа следстви оргăнĕсем растратăсемпе çарагусем пирки панă ĕçсене вăхăтра пăхса тухмаççĕ, суд тусан та растратăсене вăхăтра шыраса илмеççĕ.

Суту-илў организацисем начар ĕçленин сăлтавĕ партилĕ-политикăлă ĕçе йĕркелеменнинче. Пухура парторгсем, вĕсен заместителĕсем, комсоргсем те пулчĕç. Анчах вĕсем парти тĕ политикăлă ĕçе мĕнле йĕркелени çинчен çăвар та уçмарĕç. Тўрех калас пулать, суту-илў организацисенче ĕçлекен коммунистсем партилĕ-политикăлă ĕçе суту-илў ĕççĕсемпе çыхăнтарса пымаççĕ. Кадрсем çинчен пĕрмай калаçаççĕ, анчах вĕсене вĕрентсе, ĕçре пулăшса пыни çук. Чеботоргри пуçламĕш парторганизацинче прилавкă работникĕсем хушшинче политикăлă ĕçсене туса пырас, стахановла йухăма сарса йарас тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Кунти прилавкă работникĕсем ниçта та вĕренмеççĕ, хаçатсем те çырăнса илмеççĕ.

Чеботоргри пуçламĕш парторганизацинче парти пухăвĕ пулманни пĕр уйăх çурă çитнĕ ĕнтĕ. Ку вăхăтра кружоксенче те занятисем пулман, коммунистсем ниçта та вĕренмеççĕ. Стайновă парторг коммунистсенчен те, массăсенчен те тĕтăлса кайнă. Вăл пухăва та пыман. Чăвашторг, Чăвашсойуз, Чеботорг пуçламĕш парторганизацисем ўсмеççĕ. Мĕншĕн тесен, вĕсем комсомолецсемпе, партире тăман активпа ĕçлеме пăрахнă. Комсомолецсем ăмăрту организатăрĕсем пулса тăмаççĕ. „Çамăл кавалери" ĕçне никам та пăрахăçа кăларман пулсан та, кунта вăл ĕçе чĕртсе йарасси çинчен шутласа пăхман.

Чеботорг тата Чăвашторг пуçламĕш парторганизацисем суту-илў ĕçне лайăхлатасси çинчен парти пухăвĕсенче сўтсе йавмаççĕ. Çавăнпа та ПСК(б)П хула комитечĕн секретарĕ Лапин йулташ çак ыйтусене питĕ çивĕччĕн лартрĕ. Пухури коммунистсем унпа килĕшрĕç.

Суту-илў ĕçне лайăхлатса йарасси çинчен ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ йышăннă решенине пурнăçлас тĕлĕшпе пуху решени йышăнчĕ.

П. Перлов

ЎКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Варанăв лейтенант подразделенинчи (Харькăв çар округĕ) бойецсем практикăлă вĕренўре.

(Союзфото).

Призыв умĕн

Кăçалхи çĕнтабĕрĕн 1-мĕшĕнчен Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн черетлĕ призывĕ пуçланать. Кăçалхи призыв тĕнчери лару-тару пысăкăнхи пек те мар çивечленсе çитнĕ тапхăрта, вăрçă харушлăхĕ ўссе пынă тапхăрта пулса иртет. Инçет-Хĕвелтухăçĕнче хура пĕлĕтсем капланса тăраççĕ; Йапони военщини провокацисем туса Йапоние ССР Союзне хирĕç вăрçă туртса кĕме тăрăшать; фашисла çĕршывсем—пуринчен ытла Германипе Йапони—социалисăм çĕршывне—Совет Союзне хирĕç вăрçă пуçласа йама хатĕрленеççĕ.

Анчах хăйĕн правительстви, хăйĕн большевикла партийĕ тавра тата хăйĕн йуратнă çулпуçĕ Сталин йулташ тавра пĕтĕçнĕ аслă совет халăхĕ тăшмансем мĕн каланине куç вĕçертмесĕр сăнаса тăрать, вăл Рабочисемпе Хресченсен паттăр та хăватлă Хĕрлĕ Çарĕ кирек мĕнле тăшмана та вилĕм тивмелех çапса аркатассине çирĕп шанса тăрать.

Призывниксем—социалисăмлă тăван çĕршыв патриочĕсем—Хĕрлĕ Çар призывне вĕçĕмсĕр пысăк савăнăçпа кĕтсе илеççĕ, мĕншĕн тесен „Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕнчи çар служби—ССР Союзĕнчи гражданисен хисеплĕ тивĕçĕ пулса тăрать" (ССРС Конституцин 132-мĕш статйинче).

Чăваш республикинчи призывниксем призыва тивĕçлĕн кĕтсе илеççĕ. Хутла пĕлменнисем 113 çын тата сахал пĕлекенсем 2.045 çын пулнă пулсан, вăл призывниксем халь хăйсен хутпĕлменлĕхне тата сахал пĕлнине йăлтах пĕтерчĕç. 1.183 çын трахомран тата ытти чирсенчен сывалчĕç. Нумай призывниксем çара кайиччен çар ĕçне тата политикăна вĕренчĕç, вĕсенчен 30 проценчĕ икшер-висшер оборонă значокĕсем илнĕ.

Призывниксем общественлă ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Союзлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсене суйлана вăхăтра çĕршер призывниксем агитатăрсем пулса ĕçлерĕç.

Призыва хатĕрленес ĕçре çитменлĕхсем те пур-ха. Призывниксем хушшинче массăлă ĕçе кирлĕ пек организацилемен, ку ĕçе пусарса пыракансем çук. Хăшпĕр районсенче хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕçе хаклайманни сисĕнет. Ку ĕç пуринчен ытла Патăрйел, Парачкав тата Шăнкăртам районĕсенче начар пырать, унта призывниксем хушшинче хут пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсем те пур. Сăмахран, Патăрйел районĕнче хутла пĕлмен призывниксем 24 çын, сахал пĕлекенсем 71 çын пулнă, çулталăк хушшинче хутла пĕлменнисене 5 çын тата сахал пĕлекенсене 65 çын çеç вĕрентсе кăларнă.

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕ призыв тĕлне пурне те хут пĕлекен тумали çинчен йышăннă постановленине çак районсен руководителĕсем манса кайнă, ЧАССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ çак кирлĕрен те кирлĕ ĕçе йĕртсе пыман.

Призыв пуçланиччен шутлă кунсем çеç йулаççĕ. Çĕнтабĕрĕн 1-мĕшĕччен хутла пĕлмен тата сахал пĕлекен призывниксене пурне те вĕрентсе кăлармала, чирлисене—сыватса çитермеле.

Призыва чи лайăх хатĕрленесси—кашни районăн тата пĕтĕм республикăн чыслă ĕçĕ пулать. Массăлла-политикăлă ĕçе вăйлатмала, ăна хуçалăхла-политикăлă ĕçсемпе çыхăнтарса пымала, ĕççынисене тата призывниксене тĕнчери лару-тăру çинчен кунсерен ăнлантарса памала, призыва вăхăтра тата организациленĕ пымала, призывниксем хушшинче ĕçсе ашкăнса çўрессине пĕтермеле,—çитес призыв ăнăçлă иртесси çакăнтан килет ĕнтĕ.

М. Гринев.

Приборсем туйанчĕ

Йенĕш Нăрвашри (Тăвай р.) тулымар вăтам шкул çĕнĕ вĕренў çулне хатĕрленсе çитрĕ. Шкулта пурĕ 400 ача вĕренмеле. Вĕсем валли классем çителĕклĕ. Кантăксене лартнă, 112 партă, 15 доска йусаттарнă. 850 тенкĕлĕх физикăпа хими приборĕсем туйаннă Ачасем валли 3000 тетрать тата ручкă, перо, кăранташсем çителĕклĕ илнĕ. Вутă 170 кубла метр хатĕрленĕ. Физкультурă площадки тунă.

А. Зайцев.

Шкул çурчĕ çук

Семенăвă (Канаш р.) йалĕнче шкул пулман. Çавна шута илсе „Хĕрлĕ йалав" колхоз 1934 çулта шкул валли 1250 тенкĕ парса вăрмантан йăвăç илсе турттарчĕ, пураттарчĕ. Анчах районри тивĕçлĕ организацисем ĕçре пулăшу памасăр тăнине пула, шкула пайанхи куна çитсе те туса пĕтермен. Çĕнĕ вĕренў çулĕ пуçланасси нумай йулмарĕ, йалта шкул çурчĕ çук.

Васильев.

Хаçат-журнал çыранакансен йышĕ ўсрĕ

Иртнĕ çулсенче Йеншикре (Патăрйел р.) хаçат-журнал сарас ĕç йапăхчĕ. Çырăнна хаçат журналсене подписчиксем вăхăтра илеймен. Çавна пула 200 хуçалăхран 73 шĕ кăна çыраннă.

Кăçал почтальйонра Польаков колхозник ĕçлет. Вăл ĕçлеме тытăннăранпа хаçат-журнал çыранакансен йышĕ нумай ўсрĕ.

Н. В.

Çамрăк художниксен выставки

Улатăрти художествă училищи пĕлтĕр кăна чăн-чăнласа ĕçлеме тытăнчĕ, уйччен вăл художествăна йуратакансен ушкăнĕ пек пулнă. Улатăр училищинче вĕренекенсен Чăваш тĕп музейĕнче уçăлнă выставки—1938 çулхи вĕренў çулĕнче училищă тăрăшса ĕçленине кăтартать.

Çамрăк художниксем Саперăв, Волкăв, Кудельких, Львов, Илйин тата ыттисем те выставкăна чылайах хитре картинăсемпе ескизсем панă. Саперăвăн „Колхоз пасарĕ" йатлă картинĕ халихи йалăн пуйанлăхне, халăх савăнăçне кăтартса парать.

Гравюрăсенчен Куделькихăн „Улатăрти пăравуссем йусакан савăт" картинĕ, Илйинăн „Миша çинче" картинĕ, Львовăн „Ыйткалакан" картинĕ,—вĕсем мăлашне те тăрăшсан, чăн-чăн художник ăсталăхне туйанма пултарнине систереççĕ.

Училищăра Григорьев, Мăсников, Быков—квалификацилĕ художниксем çамрăксене пĕтĕм ăс-хăватне вĕрентнине палăртса хăварас пулать.

Çамрăксене вĕрентмелле, пысăк ăсталăх памала. Искусствăн малашлăхĕ—вĕсенче.

Я.

Манăн сĕнў

Чăваш орфографи тĕп правилисен проекчĕн 20-мĕш пунктĕнче „ла-ле аффикс хушăнса пулнă наречисемпе паллă йачĕсене икĕ л çыраççĕ" тенĕ. Ман шухăшпа ку тĕрĕс мар. Вăрманаллă, çўлеле, лашала сăмахсем сăмах тĕпĕ çумне ла-ле аффикс хутшăннипе пулаççĕ. Чăваш чĕлхинче ла-ле аффиксĕнче л сасăпа ниххçан та вĕрентме пултараймасть.

Кунсăр пуçне тата проектра икĕ йунашар пĕр тĕслĕ сасăсене—ччĕ ççĕ—куçармала, тенĕ. Ман шухăшпа: кирлĕ-чĕ-ха вĕсене куçарма кирлĕ пек туйăнать. Çăччĕ куçарсан—сăмахăн йăнкравлăхĕ пĕтет.

Ç. Федотăв.

Енĕç,
Йĕпреç р.

Митта Петĕрĕ

Матрос калавĕ

Ирне кайала çума пуçланă çăмăр иртнĕ каçхине çеç лăпланчĕ. Хĕвел ирĕккĕн хĕмленсе хĕртет. Ăна чăрмантарса хупăрлакан пĕлĕтсем, çăмăр пĕлĕчĕсем çук халь. Тўпе йанкăр уçă. Тўпе вĕçĕ-хĕррисĕр çуталса выртакан тинĕс шывĕ йевĕрлех йе лайăх йышши кантăк йевĕрлĕ—кăн-кăвак тĕслĕ курăнса тăрать.

Канакансем тинĕс хĕррине тухса ларнă. Çăмăр умĕн пуçланса халĕ те ахăрванăн ытканса темиçе ĕмĕр хушши çăвăнакан чуллă çырана пыра-пыра çапăнакан хумсем çине тинкерсе пăхаççĕ вĕсем. Çав хайар хумсен хушшинчех сывлăш çăтма тухнă дельфинсем курăна-курăна кайаççĕ. Вĕсем курăнсанах вара канакансем кăшкăрашма, дельфин мĕнле чĕр-чун иккени çинчен пĕр-пĕринчен ыйтма, пĕрне-пĕри ăнлантарма пуçлаççĕ:

— Пăх-ха, мĕн пысăкĕш!?

— Чăнах та, ĕне пекех!

— Ех, пăшал пулсанччĕ!

— Инçех те мар вăт. Нимех те мар персе илме пулатǃ!—тет снайпер, Ленинград çар округĕнчен кунта канма килнĕ красноармеец.

Калаçакансен çумне матрос та хутшăнать. Матрос, кăвакарма пуçланă çўçлĕскер, çапах çав çамрăк сăнлă, йаланах савăнăçлă пит-куçлăскер, Хура тинĕс çинчен, тинĕсри тĕрлĕ йышши чĕрчунсем çинчен, итлекенсем пулсан—темиçе лекци вуласа пама хатĕр. Ăна итлемесен кама итлемелле. Дельфин çинчен вăл пĕлмесен кам пĕлмеле. Вăл вĕт хăйĕн çур ĕмĕрне çак тинĕсре, çак тинĕсре ишекен карапсем çинче пурăнса ирттернĕ. Тинĕсе çав тери хăнăхса çитнĕ вăл, тинĕсе çав тери йуратать. Кунта та, хăйĕн отпуск вăхăтне курортра ирттернĕ çĕрте те пуринчен ытларах тинĕс çинчен, йаланах тинĕс çинчен калаçать. Ăна пурте пысăк тимлĕхпе итлесе лараççĕ. Калаçсан-калаçсан:

— Тен сире итлесе йăлăхтарчĕ те пулĕ,—тет вăл, пирускине чĕртнĕ май, куç айĕпе кăмăллăн кулса.—Ытла та шывлă калаçатăп пулĕ. Мĕн тăвас тетĕн: сăмахсем шывлă тухнăшăн епĕ айăплă мар—эпĕ.

Ава йепле хумханать вăл.

— Кала-ха, кала!—теççĕ ăна. Калама, вĕçĕмсĕр калаçма ыйтаççĕ.

Матрос калать:

Дельфин — кит йевĕрлĕ пулă. Чĕпписене вăл вăчча тăкса мар, çапла, кит пекех, сысна пекех çуратать, пĕр уйăх хушши чĕчĕ ĕмтерет, кайран çиме вĕрентет. Тинĕсре мĕнле пулă пур, пĕрне те тиркесе тăмасть дельфин, пурне те çиет. Çавăнпа вăл самăр. Хăшпĕри 30 пăтлă пулать. 30 пăтран 20—25 пăт çу тухать. Унăн çăвĕ, кирлĕрен те кирлĕ çу, авиаци промышленноçĕне кайать. Чĕпписене вăл уйăх иртнĕ хыççăн чĕчĕ ĕмĕртмест пулин те хăйĕнчен хăвармаст. Ава, кĕтўпех çўреççĕ вĕсем. Унта ĕнтĕ пĕр çемйе. Йут çемйене хăйсемпе хутшăнтармаççĕ. Мĕншĕн çийĕле тухаççĕ, тетĕр эсир. Сывлăш çăтма тухаççĕ. Ўпкепе сывлаççĕ вĕсем. Çийĕле тухса сывлăш çăтмасăр шыв айĕнче ик сехетрен ытла çăтма пурăнма пултараймаççĕ. Кунçăтса пурăнма пултараймаççĕ. Кунта, хĕрринче нумайăнах мар-ха вĕсем. Лерелле, калăпăр, пĕр 20—30 километр шалала кайсассăн—ну и, нумай та вара! Пуринчен ытла каçхине кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпе шампăлтатса çўреççĕ. Хăшпĕр чухне куçа уйталаççĕ: айакран пăхсан, çыйăрăнса пыракан кимĕсем пек курăнаççĕ.

Йĕри-таврала, итлесе ларакансем çинелле пăхса илчĕ те матрос тепĕр пируска чĕртсе йачĕ. Йăлăнхи пекех лăпкăн, нимĕн хумханмасăр тумасăр малала калама пуçларĕ.

Пĕррехинче çапла, Одессăран тийенĕ таварсемпе Батумине кайма тухнă пирĕн карап. Вахтăра епĕ. Пĕлĕтлĕ каç. Йĕри-тавра пăхса илетĕп. Тинĕсĕн вĕçĕ те çук пек, хĕрри те. Çапах, каç мĕнле кăна тĕттĕм пулсан та, курăнмасть тесен те нимĕн курăнмаст тесе калаймăн, хăвна ху лăпланса пыма тинĕççĕсемшĕн пĕр сăлтав та çук, саккун та. Курас пулать. Есĕ вахтăра тăратăн пулсан—пĕтĕм карап умĕнче ответлă: карапăн куçĕ есĕ, карапăн йалавĕ. Çав самантра пĕтĕм карапăн ăрасиĕ сăнран килме пултарать.

Çапла. Пыратпăр. Малала шăватпăр. Хутран-ситрен, капитан приказĕ тăрăх, прожектăр йалкăшса çутатать. Вăл вăхăтра вара епĕ бинокльпе куç тĕлне тытатăп. Малала пăхатăп. Сулахайала, сылтăмала, йĕри тавра пăхса çаврăнатăп. Сасартăк сылтăм йенче, карап пăлхатса хăварнă хумсем çинче, пĕр мĕлке, хураскер, сиккелесе илнине сăнарăм.

— Мĕн?—ыйтатăп хамран-хам.—Дельфин пуль.

— Çавă,—ответлетĕп.

Пăхатăп. Лайăххăн тинкерсе сăнатăп.

— Çук. Дельфин мар ку.

— Вăл мар,—ответлетĕп хамахам.—Кимĕ ку. Кимĕ! Мĕнле-ха кимĕ? Çак вăхăтра, çурçĕр тĕлĕнче, кунта вăл, тинĕс варринче мĕн шырасă, мĕн туса çўретĕр?

Капитана пĕлтеретĕп. Чарăнчĕ карап. Карап хыçĕнче çакăнса пыракан шлюпкăна шыв çине антаратпăр. Хăпăл-хапăл ун çине тăваттăн кĕрсе лартăмăр та лешкимĕ патне вĕçкатпăр. Кимĕ. Кимĕ çинче икĕ çын. Вĕсене епĕр прожектăр çутипе лайăх куратпăр. Кăмлĕн лармаççĕ. Ăнланмалла мар: темскер тăпăçланаççĕ, хăлăçланаççĕ. Çывхартăмăр.

— Пулăшăр-ха? Тархасшăн мана çак усалтан хăтарăр!—тет кимĕ çинчи хĕрарăм çиççе те асапла сасăпа. Çумĕнчи арçынниене çапать хăй, мăйĕнчен пăвать, шăлпа кăшлама хăтланать.

— Мĕн ыйхĕ пулнă сире? Камсем ес?!

Хĕрарăм лăпланчĕ. Тапаçланса арпашнă çўç-пуçне йусама пуçларĕ. Мескĕн сăн-сăпатăн тинкерсе пăхать пирĕн çине. Арçынни те пăхать. Вăл кăштах кулкалам пек те тăнать.

— Кимĕсем есĕр?

— Канакансем,—тет хĕрарăм.—Кунта, курортра епĕр. Йăрăнма тесе тухрăмăр.

— Çакăнта йăрăнаççĕ-и вара. Çыранран ытла та инçе килнĕçке?

— Вара çав,—тет хĕрарăм.—Хам ухмах пултăм еп. Акă, усал, мана кунта илертсе килчĕ те, вăйпах пусмăрлама пуçларĕ.

— Пурин çинчен те ан кала-ха тархасшăн,—сăмах хушрĕ арçынĕ.—Йулташсене чарса ан тăр. Килĕшĕпĕр ĕнтĕ. Тимĕстĕп. Кăçар.

Хĕрарăмр и каçару ыйтакан арçын пирĕн çине йăвашшăн пăхса куçĕсене култарчĕ.

— Çук. Килĕшместĕп,—терĕ хĕрарăм куççулĕле ача пек макăрса.—Мана улталаçа, манăн хĕрлĕхе вăйпах туртса илме шут тытнă усала каçарма пултараймастăп. Илĕр ăна, матрос йулташсем! Çитес пристăне антарса хăварăр. Тем пекех тархаслатăп сире. Илĕр ăна хăвăрпа пĕрле.

Хĕрарăм сăмахне итлерĕмĕр. Хăйне те тинĕс варрине пĕччеçи хăварма килĕшмерĕмĕр. Илтĕмĕр хăвăрпа пĕрле. Вĕсем иккĕшĕ те пĕр шухăшлăскерсем, лешĕ йене тарса каçма хатĕрленнĕ пĕчĕк чунлă пысăк шпионсем иккенне часах пĕлтĕмĕр...—тесе пĕтерчĕ ватă матрос хăйĕн калавне.

Пурте уççăн сывласа йачĕç. Матрос çине тулли йуратупа, ăшă кăмăлпа пăхса илчĕç.

Тинĕс йенчен йўрĕк çил вĕрет. Хумсем вăйлăнрах шавлама пуçларĕç. Çанталăк каллех çăмăр пама хатĕрленет.

Ангăçри пахчине вырнаçнă столовăйăн террасси çине тухса тăнă повăр помощникĕ, йаланах кăмăллăн кулакан куççемлĕ. Кулине, каникулсем апатлане вăхăчĕ çитнине пĕлтерчĕ.

Германи рабочийĕсем Торез йулташ патне çыру йанă

ПАРИЖ, августăн 10-ш. (ТАСС). „Йуманите" хаçат Торез йулташ адресĕпе йанă çырăва пичетлесе кăларнă, вăл çырăва Германи рабочийĕсем, Чехословаки чиккинчи районсенче ĕçлекен профсойуз членĕсем, социалисем тата коммунисем йанă. Рабочисем хăйсен çырăвĕнче фашисла Германи урса кайсах Чехословакине туртса илме хатĕрленнине тăрă шыв çине кăларассĕ. Гитлер приказĕ тăрăх грузовиксемпе автобуссене шоферсемпе пĕрлех мобилизациленĕ. Строительствăра ĕçлекен рабочисене, центрти районсенчен хăваласа пынаскерсене, темскерле вăрттăн ĕç валли пĕр вырăнтан теçĕр вырăна куçарассĕ. Чехословаки чиккине пыма пит васкасах çулсем тăвассĕ. Çыру çакăн пек сăмахсемпе пĕтет: „Пирĕн çĕршывра мирлĕ пурнăçшăн кĕрешекен вăйсем чылайăйне ан манăр. Ытти çĕршывсенчен те тивĕçлĕ пулăшу парсан вăл вăйсем тата нумайрах ÿсĕççĕ".

Испани пичечĕ Йапони провокацийĕ çинчен

БАРСЕЛОНА, августăн 10-мĕш (ТАСС). Сулахай республикăлла партин Мадридра тухакан хаçачĕ „Политика" çапла çырать: „Йапонин уçăмсăр сĕнĕвĕсене хирĕç Совет Сойузĕ хăйĕн уçăмлă та татăклă требованийĕсене кăларса тăратрĕ. Йапонин ултавлă та пăрăнчăк дипломатийĕ ыйтусене йăвăрлатса йама специализациленнĕ, çак вăл Йевропăри фашисла çĕршывсенчи хăйĕн тусĕсемшĕн те правилă пулса тăрать. Унăн авкаланса хуçкаланчи тата софисăмсем хыçĕнче ирсĕр те преступленилĕ вăйа тытăнса тăрать, вăл вăйă çавăн пек ĕçех витсе тăрать".

Совĕт Сойузĕ тăрăх

●● Таштынск районĕнчи (Хакасси) колхозсен уйхир станĕсенче 200 ытла санитари постисем тунă. Инкек пулсан колхозниксем хăйсемех, йатарласа уçнă икĕ уйăхлăх курсран вĕренсе тухнăскерсем, малтанхи пулăшу параççĕ. Вĕсем ГСО значокĕн нормисене панă.

●● Харькăв облаçĕнче районсем хушшинчи выльăх-чĕрлĕх йармăрки пысăк йăнăçлăхпа пулса иртнĕ. Колхозсем тата колхозниксем нумай выльăх-чĕрлĕх илсе пынă. Сутуилÿ тăвакан организацисем йармăркăра 5 мĕлйун тенкĕлĕх ытла промтаварсем сутнă. Колхозсем 447 грузовик автомашинă туйаннă.

●● Ленинградри аероклубсем Авиаци кунĕ тĕлне производствăран уйăрăлмасăр вĕрентсе çĕршер льотчик хатĕрленĕ. Тĕп аероклубра 78 курсант йăнăçлăн вĕренсе тухнă.

(ТАСС).

Хаçат-журналсене вăхăтра çитерет

Кив Шулхавити (Вăрмар р.) почтальон Николайĕв хаçат журнал сарассипе тăрăшса ĕçлет. Вăл ĕçлеме тытăннăранпа Кив Шулхави йалне (120 хуçалăх) 150 екземпльар тĕрлĕрен хаçат-журналсем пырса тăраççĕ. Николайĕв йулташ хаçат-журналсене подписчиксем патне вăхăтра çитерет. Тырă выракан колхозниксене хаçатсем вуласа парать.

В. Григорйĕв.

Мускаври Метрон Горький йачĕпе тăракан урамри радиусне хута йарас умĕн.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: „Сокол" йатлă станцине кĕнĕ çĕрте.

Л. Великжанин фото-ÿкерчĕкĕ (Сойузфото).

Стаханăвла йухăма вăйлатнипе

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен Пĕрремĕш Çессийĕсен итогĕсене, малтанхи çурçул хушшинчи ĕççене сÿтсе-йавас ыйтупа деткомиççи системинчи хуçалăх активĕн канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура предприйатисенчи паллă стаханăвçăсем: Аборинă, Казачковă тата ытти йулташсем те пулчĕç.

Канашлăва пухăннисем РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совет Çессисен ĕçĕсене, решенисене пурте пĕр кăмăлпа ырласа Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн çĕнĕрен суйланă президиумне, правительствăна Ленин—Сталин партине парăнса ĕçлекен сыхсене суйлавине палăртрĕç. Çавăнпа пĕрлех канашлура пулнисем Çессисен ĕçĕсемпе кашни рабочийе паллаштарма пулчĕç.

Деткомиççи системи производствă планне йăнăçлăн тултарса пырать. Çурçул планне 125 процент пурнăçа кĕртнĕ. Ку продукци кăларассине иртнĕ çулхинчен 30 процент ÿстерсе пулать. Ĕç тухăçлăхĕ 22,3 процент ÿснĕ, продукци хакне 8,8 процент (нормă 6,2 процент) чакарнă.

Уйрăмăнах Шупашкарти хапрăк (директорĕ Трофимăв), Сĕнтĕрвăрринчи савăт (директорĕ Лукин) пысăк тухăçлăхпа ĕçленĕ. Вĕсем хăйсен планне 140 процент ытла тултарнă.

Плана иртерсе тултарасси пуринчен малтан ударниксемпе стаханăвçăсем тăрăшса ĕçленипе пулнă. Предприйатисенче стаханăвла ĕçлекенсен шучĕ ÿссех пырать. Хальхи вăхăтра пĕтĕм системăри рабочисен хисепĕнчен 40 процентчĕ стаханăвçăсемпе ударниксем шутланаççĕ. Вĕсем плана тултарса пыракан сынсем кăна мар, культурăпа политикă тĕлĕшпе ÿссех пыракан тата рабочисем хушшинче культурăлă-массăлă ĕçе вăйлатас, ĕçре çĕнĕ меслетсемпе усă курас йенĕпе ĕçлекен организаторсем пулса тăраççĕ. Тĕслĕхшĕн, Шупашкарти хапрăкра ĕçлекен Спирин йулташах илер. Вăл хапрăка килнĕ чухне хут пĕлмен сын пулнă. Производствăра ĕçленĕ вăхăтрах 5-мĕш класран вĕренсе тухрĕ. Суйлав кампани вăхăтĕнче доверённăй пулнă. Производствăра стаханăвла тухăçлăхпа ĕçлет. Хапрăк коллективĕ Спирин йулташа профсойуз комитечĕн председателĕ пулса ĕçлеме суйларĕ. Нумай пулмасть вăл коммунисен партине кĕчĕ. Кунашкал пултарулă сынсем ытти предприйатисенче те сахал мар.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессийĕнче депутатсем начар ĕçлекен халăх комиссариачĕсене критиклени деткомиççи системине те тивет. Мĕншĕн тесен пысăк условисем пур пулин те хăшпĕр предприйатисем ситтелĕксĕр ĕçлесе пыраççĕ ха. Кушутра Çĕмĕрлери савăт (директорĕ Старухин) тăрать. Чăнах та вăл савăт хăйĕн çурçулти планне тултарнă. Çав вăхăтрах унта продукци пахалăхне лайăхлатас ыйтăва тивĕçлĕн çĕклемен. Савăт директорĕ Старухин йулташ рабочисен пĕлĕвне ÿстерес ĕçпе, тирпейлĕх тăвассипе интересленмест. Техникă вĕренĕвне начар организациленĕ, хĕрлĕ кĕтессем ĕçлемеççĕ. Хĕллене хатĕрленесси те сÿрĕк пырать.

Çĕмĕрле районĕнчи партипе совет организацисем те савăт ĕçĕпе интересленмеççĕ. Райĕçтăвком 7 уйăх хушшинче те савăт отчотне итлемен. Райĕçтăвком йе райком работникĕсем савăтра пулмаççĕ. Мыслçăри савăта та районри организацисем тивĕçлĕ пулăшу памаççĕ. Райком вăл савăтсен руководствинче нумай пулмасть рабочисен хушшинчен пынă сынсем ĕçлени çинчен манnă пулас.

Деткомиççи пĕрлешĕвĕ предприйатисене тивĕçлĕн йертсе пырать теме çук-ха. Техникăлă материалсем (бязит, тăхлан, т. ыт.) вăхăтра тăратман пирки сахал мар чăрмавсем пулаççĕ.

Канашлура пулнисем рабочисен массине ĕçри çитменлĕхсене пĕтерсе, 1938 çулти плана Октйабĕр уйавĕ тĕлне тултарассишĕн кĕрешме организациленме пулчĕç.

Зимин.

Тĕн праçникĕпе ĕçкĕ пирки

Çĕнĕ Евпеçре (Улатăр р.) пупсен ултавне ĕненекенсем масарçине „ваттисене асăнма" кайнă. Унта нумайĕшĕ ĕçсе ÿсĕрĕлнĕ те килĕсене таврансан кÿршисемпе калле ĕçме тытăннă.

Çав кун П. Тÿлейкин колхозник те вайла ĕçкĕ тунă. Вăл ĕçсе ÿсĕрĕлсен хăйĕн ывăлĕпе кинне вăрçма тытăннă, çĕçĕпе чикме тăнă. Хăнисем Тÿлейкина тытса витене хупнă.

Вăхăт нумай та иртмен, Тÿлейкин витере — „çунтараn!" тесе кăшкăрнă. Пĕр хăна арăмĕ витеалăкне уçса йанă та витерен çулăм пĕрхĕнсе тухнă. Аслăксене йарса илнĕ. Тÿлейкина витерен сĕтĕрсе кăларнă.

Пĕр самантрах тăватă кил çунса кайнă. Пупсен ултавлă праçникĕпе ĕçкĕ пирки тăватă çемйе нимсĕр тăрса йулнă.

М.

„Пĕрремĕш спас"

Ĕлĕк авал Византийă империнчи Константинополь хулинче тĕрлĕрен „усал сывлăшсене" ĕненекен грексем пурăннă. Вĕсем хулана „усал сывлăшсенчен" тасатас тата уйхирсене çăмăр антарса шÿтерес, тесе ик ерне хушши хăйсен тĕн праçникне туса иртернĕ. Вĕсен тĕнĕ христос тĕнĕ пулман. Христос тĕнĕ çинчен вĕсем пĕлмен те. Вăл праçник августăн 14-мĕшĕнче (кивĕлле августăн 1-че) пуçланнă. Праçнике иртернĕ вăхăтра шыва чыласси пысăк вырăнта пулнă. Грексем шыв „усал сывлăшсене" хăваласа йама тата çăмăр антарма пултарать тесе шутланă. Христос тĕнне йышăнсан та вĕсем хăйсен тĕн йăлисене пăрахман, кив йăласем çумне христос тĕнĕн йăлисене хутшăнтарнă. Çапла христос çинчен ним пĕлмен авалхи „язычник" грексен тĕнĕн йăлисем христос тĕнне куçнă. Çакăнтан пупсен йухан шыв çине хĕрессемпе тата иконсемпе айса шыва „кĕлтуса тасатасси" тата „тасă" шывпа, хĕреспе хула урамĕсемпе килĕсем тăрăх çÿресси пуçланса кайнă.

Мануил патша çак тĕн сĕрĕмлĕ, тĕттĕм, ултавлă йеркепе пысăк усă курнă. Византийă патшалăхне час-часах пырса тапăннă сарацинсене çĕмĕрес тĕлĕшпе вăл хăй патшара ларнă вăхăтра фронтра „турă амăшĕн" тата „Христос спасăн" иконĕсем курăннă, тесе суйа халап сарнă. Мануил патша çарĕ сарацинсене çĕнтерсен, ăна „курăннă" иконсем пулăшнă, тесе ĕнентернĕ. Çак суйа патша хăйĕн çарне хавхалантарса, патша йеркине çирĕплетес шухăшпа кăларнă халап тăрăх пуçланнă „спас" праçникĕ ĕненекенсене ку таранччен сĕрĕмлесе пырать те ĕнтĕ. Ку праçнике Мануил пур çĕрте те уйавлама, патшалăх праçникĕ туma хушнă.

„Спас кĕсенĕ" Раççийăна та çитмесĕр йулман. XII-мĕш ĕмĕрте феодаллă Раççийăн православнăй чиркĕвĕ Византийă патшалăхĕн Константинопольхулинчи патриархне пăхăнса тăнă. Раççийăра грексен пупĕсем те сахал мар пурăннă. Ку ĕнтĕ „спас" праçникне уйавлассине Раççийăра сарма пулăшнă. Патриарх Раççийăн пур чиркÿсене те „спас" кунне уйавлама хушнă. Патриарх хушнине пурнăçа кĕртме Раççийăра пурăнакан грек пупĕсем питĕ нумай тăрăшнă. Раççийăри князсен влаçне çирĕплетес тесе, Владимир князĕствин, Андрей Боголюбский князĕн çарĕнче те Мануил çарĕнчи пекех, „турă амăшĕпе" „Христос-спасăн" иконĕсем çуталса курăнни çинчен нумай туртса кăларнă.

Мануил патшапа Боголюбский çарĕсенче иконсем курăнни пулман, пулма та пултарайман. Иконсен кĕлеткине йăвăçран тунине такам та пĕлет. Вĕсем сын йатмасăр вырăнтан вырăна куçайманнине те пĕлмен сын çук. Иконсем хăйсене хăйсем çутатма пултарайманни çинчен те çавнах каламала. Иконсен хăват пур тесе халăха ĕнентĕрес майпа, „Святой Иоанн Кронштадтский" хăйĕн пÿлĕмĕсенче иконсене вырăнтан вырăна куçарса „хăватсем" тунă.

Сынсем алăкран пÿлĕмеле кĕрсенех урай хăмисем тата иконсемпе сынсем кĕрсе çÿрекен алăксем хушшинче пытанса выртакан пружинсем ĕçлеме пуçланă. Çав пружинсем иконсене вырăнтан вырăна куçарнă.

Раççийăра „спас" кунĕ хуçалăх ĕçĕсемпе çирĕп çыхăнса тăнă, сăмахран, ыраш акма „спас" кунĕнче пуçланă, маларах акма йураман. Паллах „спас" ыраша вăхăтра акассине питĕ нумай чăрмантарса тăнă, тырă тухăçне сиенленĕ, ĕненекенсене „спас" халĕ те нумай сиенлет. Уйрăм хуçалăхсем нумайăшĕ ыраш акма „спас" кунне кĕтсе кайа йулса тухаççĕ, вара начар тырă вырса илеççĕ.

Нумайччен çанталăк уйар тăнă хыççăн, ĕлĕк час-часах пупсем халăха икон çĕклеттерсе тухнă. Вара çав кунах йе тепĕр кун çăмăр çунă. Кунта пупсем ĕненекенсен тĕттĕмлĕхĕпе пысăк усă курнă. Вĕсем барометрпа çăмăр пулассине малтанах пĕлнĕ. Вара пуп чейелĕхĕпе ултавне пĕлмен сынсемшĕн çăмăр уйхире иконсемпе [illegible]

„Спас" пыл хурчĕ ĕрчетсе пыл тăвас мăйупа та çыхăнса тăнă. Ĕненекенсем „спас" кунне вĕлесенчи пыла иккĕмĕш хут илеççĕ. Ку пыла ĕненекенсем пыл хурчĕ ĕрчетĕр тесе, „кĕлтуса тасатма" тата христос тĕнĕн йăлипе „ваттисене асăнма" „спас" кунех чиркĕве леçеççĕ. Çавăнпа та „спас" кунне „Пыл спасĕ" йе „Пыллă спас", тенĕ. Паллах, „Пыллă спас" пупсем валли пыл йăвантармалли, пыл хурчĕсене час-часах хĕллехи вăхăтра апатсăр тăратса хăвармалли май пулнă. Пылхурчĕсем аслăлăх кăтартнă тăрăх пăхса пурăнсан çеç ĕрчеççĕ. Пыла „кĕлтуса тасатма", вилнĕ ваттăсен çук чунĕсене „çырлахтарма" тата йăпатма, пупсене пуйтарма чиркĕве леçни пыл хурчĕсемпе пĕрре те сыхăнмасть, сыхăнма та пултараймасть.

„Спас" вăл тырпула уйхиртен вăхăтра тата тирпейлĕ пухса кĕме, ыраша вăхăтра акса хăварма чăрмантаракан, пыл хурчĕсене ĕрчетес ĕçе чăрмантаракан, социализм строительствине сиен кÿрекен тĕн праçникĕ. Партипе комсомол, профсойуз тата Вăрçăлă турăсăрсен сойузĕн организацийĕсем „спас" ăçтан пуçланса кайни, унăн сиенлĕхĕ çинчен массăна анлăн ăнлантарса памала. Тĕне хирĕçле ĕçе вăйлатас майпа вăрçăлă турăсăрсен сойузĕн йачейкисене çирĕплетмеле, йачейкăсем çук çĕрте вĕсене çĕнĕрен организациленмеле.

Ф. ТИМОФЕЙЕВ.

Пĕлтерни

Августăн 13 мĕшĕнче, каçхине 7 сехетре, Хресчен çуртĕнче финанс активĕн канашлăвĕ пулать.

Кун йĕркинче:

1) Займ сарни итогĕсем.
2) Укçа-тенкĕ пухасси çинчен

Учреждениссенчи, предприйатисенчи комсодсен, бухгалтерсен, займ сарас тĕлĕшпе тата страховани йенĕпе ĕçлекен уполномоченнăйсен тата финанс контролĕ постисен канашлăва вăхăтра обйазательнă пымала.

Хула финанс пайĕ.
Перекет касси.

Чăваш тĕп музейĕнче

Чăваш вăрманĕсем çинчен кĕнеке

Чăваш тĕп музейĕ чăваш вăрманĕсем çинчен ăслăлăх йенĕпе çутатса пăмĕ тата вăрмансен промышленнăçлă хаклăхне кăтарма кĕнеке хатĕрленĕ.

Хальхи вăхăтра кÿлĕсене сăнас, пĕлес ĕç пырать.

„Динамо" колхоз историйĕ

Куславкка районĕнчи „Динамо" колхоз историне вĕренес тĕлĕшпе музей бригади ĕçе тыттăннă. Бригадăра музей ăслăлăх работники Симонăвă, чăваш художникĕсем Спиридонăв тата Данилăв йулташсем ĕçлеççĕ.

Тĕпчев ĕçне ĕлĕкхи йал историне тата колхоз ÿсĕмне кăтартасси кĕрет. „Динамо" колхозăн макечĕ музейре пулмалла.

И. Скворцов.

Чăваш АССР-ĕн Рабочисемпе Хресченсен тата Красноармейĕцсен депутачĕсен Шупашкар хула совечĕ пĕлтерни

Рабочисемпе Хресченсен тата Красноармейĕцсен депутачĕсен Шупашкар хула совечĕ 1917—1918 çулсенче çуралнă призывниксен, иртнĕ призывсенче чирлĕ пирки тата ытти сăлтавсемпе отсрочка илнисен пĕтĕм хулари конференцине ирттерет.

Конференци Чăваш АССР Çар комиссариачĕн Сборнăй пунктĕнче августăн 14-мĕшĕнче каçхине 6 сехетре уçăлать.

Конференци кун йĕрки: ССР Сойузĕн пĕтĕм тĕнчери лару-тăрăвĕ тата çитес призывăн задачисем çинчен.

Призывниксен конференцине пурин те обйазательнă пымала.

ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔ.

Ответлă редактăр
Н. М. СЕМЕНАВ.

ССР Сойузĕн Оборонине тĕреклетмели займа çырăнса илнисем, облигацисене есĕр алла илнĕ-и?

ССР Сойузĕн Оборонине тĕреклетмели займ облигацисене, çырăнсă илекенсем алла илейменнисене, предприйатисемпе учрежденисен бухгалтерийĕсем, çавнашкалах йалсовечĕсем перекет кассисене леçсе панă.

Ку вăхăтченех займ облигацийĕсене алла илеймен гражданăсем, хăйсем çырăннă тăрăх облигацисене районри перекет кассинче илме пултараççĕ.

Облигацисене алла илме рабочисен тата служащисен предприйати йе учреждени бухгалтеринчен займшăн мĕн чухлĕ тÿлев хывнине кăтартакан справкă илсе тăратмала.

Колхозниксен тата уйрăм хуçалăхлă хресченсен займ укçине хывнине кăтартакан расчот квитанцине тăратмала.

Облигацисене алла иличчен, займ илме çырăннисем, выльăвсенче шута кĕреймеççĕ.

1938 çулта ССРС Оборонине тĕреклетмели займ тăрăх выльăвсем çентабĕрĕн 11-мĕшĕнче тата декабĕрĕн 11-мĕшĕнче пулаççĕ.

Государствă Перекет Кассисен тата Государствă Кивçенлĕхĕн Тĕп Управленийĕ.

Çĕмĕрлери екстракт тăвакан „Большевик" савăта

каменщиксем, кăмака тăвакансем, столярсем, штукатурсем, малярсем (сăрлакансем) КИРЛĔ

Пурăнма хватер пур.

2—2

Чăвашсен Государствă Педагогикă институтне

икĕ аслă препаратăр, пĕрре—кĕçĕн препаратăр, } биологи тăрăх
виçĕ библиотекăр

к и р л ĕ

Дирекци.

Ч Ă В А Ш С Е Н

УЧИТЕЛСЕН ИНСТИТУТНЕ ИЛЕССИ ÇИНЧЕН

Пĕтĕм Сойузри Аслă шкул ĕçĕсен комитечĕ ăнлантарса панă тăрăх Учительсен Институтне çакнашкал йĕркесемпе илеççĕ:

1) Çул шучĕпе 40 çулхисем таран (малтанхи пек 35 çулхисем таран мар).

2) Пĕлÿ тĕлĕшĕнчен вăтам шкулта 9 çул вĕреннисене.

3) Политехникум тата педучилищĕ пĕтернисене испытанисĕрех илеççĕ.

4) Заявленисене халĕ те йышăнаççĕ.

3—1

ЧĂВАШСЕН УЧИТЕЛСЕН ИНСТИТУТНЕ

ВĔРЕНМЕ КĔРЕКЕНСЕНЕ ПĔЛСЕ ТĂМА

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулта Учительсен Институчĕсене вĕренме кĕмелли правилăсен 1-мĕш пунктне улăштарас пирки кăçалхи августăн 5-мĕшĕнче йышăннă 885-мĕш № постановленине пурнăçа кĕртес май, Пĕтĕм Сойузри Аслă шкул ĕçĕсен комитечĕ Учительсен Институтне вĕренме кĕрекенсен испытани тытмали предметсен шутне чакарма ирĕк панă.

Чăвашсен Учительсен Институтне вĕренме кĕрекенсем çак предметсемпе испытани тытаççĕ:

Истори уйрăмне—истори, географи, вырăс чĕлхи.
Чăвашла литературă уйрăмне—вырăс чĕлхи, литературă, истори.
Физикăпа математикă уйрăмне—физикă, математикă, вырăс чĕлхи.
Естествознани уйрăмне—хими, естествознани, вырăс чĕлхи.

Заявленисене халĕ те йышăнаççĕ.

Дирекци.

3—1

Йаранцĕв йараписем

Йаранцĕв ентĕ [illegible] пулни оригиналлăрах, йапала шутласа кăларса кăтартасшăнччĕ. Сахал мар пăхса кайса çаврăнчĕ вăл Куснар таврала (Куславкка районĕнчи Куснар йалсовечĕнче) çулталăка йахăн ĕçлет. [illegible]

[illegible] илет. Гонорар илнине халăх укçине сăтăрни, тейĕпĕр. Вăл шкулта ĕçлет пулин те, çав хушăрах тата Совет писателĕсен ретĕнче тăрать. Ака мĕн ентĕ пуринчен ытла тарăхтарать йараписене. Мускава писательсен çĕвесне кайать, унăн произведенийĕсене хрестоматисене кĕртеççĕ. Тата творческий отпуск панăччĕ пĕр çулĕнче. Сывлăхне турăстие курорта та кайнăччĕ. Ку шкул ĕçне пăсни, запятăйсене тăрăхласа кайни пулать теме те ентĕ паллах, тет Васильйĕвĕ.

[illegible] кăларассĕ. Унтан, паллах, йĕркипе, писательсен ретĕнче пулнишĕн хăйсем курайман сынна. — Марфа Дмитрийĕвнă Трубинапа кăшкăрма тытăнаççĕ. Акă Куснартан Вăрмар районне йăсаттараççĕ. Çав майсемпе йалсовет членĕнчен те, РИК членĕнчен те кăларас ыйтăва хускатаççĕ.

Çак оригиналлă ĕçе туса пĕтерме пĕтермен, Йаранцĕв валли сценкăра малалла тăсмалли май татах та сиксе тухрĕ.

Пĕр каçхине шкул директорĕ М. Д. Трубинана шкул лашипе Вăрмара кайса килме ирĕк панă. Трубинана Куснар шкулĕнех кĕртес хут килнĕ май килĕшмĕ те ентĕ Васильйĕвĕ лаша пама.

Çавăрать илет Йаранцĕв Васильйĕвĕ те пĕр каçхине Вăрмара кайса килнĕ çинчен [illegible]

— На каком таком основании, кам, ăçта шкул директорĕ. Трубинана лаша парса пама?

— Ей, Трубина, ăçта кайнă есĕ?

— Вăрмара.

— Мĕн туma? Кам ирĕк пачĕ сана Куснарти шкул лашине директортан ыйтса илме?

[illegible]